Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

16 (8082) № * Кӗҫнерни кун, 2013 ҫулхи пуш (март) уйӑхӗн 7-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Ырӑ ятлӑ хӗрарӑмсем

*Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче, вӑрттӑнлӑх мар, тӗп тупӑша выльӑх-чӗрлӗх отраслӗ аталантарни урлӑ илеҫҫӗ. Апла пулсан ялсенче пурӑнакансем те ашшӗ-амӑшӗнчен куҫнӑ ырӑ йӑлапа килти хушма хуҫалӑхра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине ҫине пӑрне витӗр пӑхмаҫҫӗ. Ҫак ӗҫре ялта пурӑнакансемӗн тата килти хушма хуҫалӑх тытакансемшӗн выльӑх тухтӑрӗ нумай чухне пысӑк ҫӑлӑнӑҫ вырӑнне килсе тухать.*

*Паянхи сӑн ӳкерчӗкре эсир сулахайран сылтӑмалла Хорнуйӗнчи ветеринари участокне иртнӗ ҫул ертсе пыма пуҫланӑ Алина Казаковӑна, 27 ҫул выльӑх тухтӑрӗнче ӗҫлекен тата халӗ 8 ҫул «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче выльӑх тухтӑрӗнче вӑй хуракан Вера Сергеевӑна, ЧР ял хуҫалӑх академийӗнчи ветеринари медицинин факультетне пӗтернӗ хыҫҫӑн пӗлтӗртенпе Ҫатракасси ветучастокне ертсе пыракан Венера Красновӑна куратӑр.*

*Вӗсен ӗҫӗпе хӑйсем пӑхса тӑракан ялсенче пурӑнакансем кӑмӑллӑ.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Ыран – Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ



**ХАКЛӐ ХӖРАРӐМСЕМ!**

Сире ҫуркуннен тата ҫепӗҫ те ӑшӑ сӑмахсен уявӗпе – Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ – Мартӑн 8-мӗшӗ ячӗпе пӗтӗм чунтан саламлатӑп!

Хӗрарӑм мӗн авалтанпах ачашлӑхпа ыр кӑмӑллӑхӑн, чунлӑхпа ӑшпиллӗхӗн чи лайӑх тӗслӗхне сӑнарлать. Этемлӗхӗн хӳхӗм пайне чунтан юратни харсӑр та хӑюллӑ геройсене ӗмӗр-ӗмӗрех паттӑрла ӗҫсем тума, ӳнерҫӗсене вара искусствӑн чаплӑ произведенийӗсене хайлама хавхалану кӳрсе тӑрать.

Пирӗн республикӑра хӗрарӑмсен арҫынсен вӑйлӑ та тӗреклӗ хулӗ ҫине яланах таянма пултарасси, ҫаплах патшалӑхӑн витӗмлӗ пулӑшӑвне те туйсах тӑрасси пирки эпӗ пӗртте иккӗленместӗп. Ҫурату сертификачӗ, пособисем, амӑшӗн капиталӗ тата патшалӑх пулӑшӑвӗн ытти тӗсӗсем телейлӗ те савӑнӑҫлӑ ачасем хушӑнсах пыракан ҫирӗп ҫемьесен йышне ҫулсерен ӳстерсе пыма лайӑх никӗс хываҫҫӗ.

Ҫуркуннехи ытарми илемлӗ ҫак кун пӗтӗм хӗрарӑма ҫирӗп сывлӑх, ӑнӑҫу тата ырлӑх сунатӑп! Ӗҫӗрсем ӑнса пыччӑр, сире ҫывӑх ҫыннӑрсем яланах юратчӑр, телейлӗ пулӑр!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ.**

**ХАКЛӐ ТА ХИСЕПЛӖ ХӖРАРӐМСЕМ!**

Сире ҫурхи чи илемлӗ уявпа – Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ ячӗпе чӗререн саламлатӑп.

Пирӗнпе кашнинпе ҫак чаплӑ кун ытларах ҫут ҫанталӑк хӗл ыйхинчен вӑраннипе, хӗрарӑмсем этемлӗхе чӗрӗлӗхпе пурнӑҫ пиллениле ҫыхӑннӑ.

Эсир ҫемье тӑнӑҫлӑхне, кил-ҫурт хӑтлӑхне упрасайӗркелесе пыратӑр. Хӑвӑр ачӑрсен пуласлӑхӗшӗн кӑна мар, килес ӑру шӑпишӗн те пӑшӑрханатӑр, яваплӑха туйса ырми-канми ӗҫлетӗр. Кирек хӑш ӗҫре те пултарулӑхпа, ӗҫченлӗхпе палӑратӑр, районӑн экономикине пысӑк тӳпе хыватӑр.

Эсир пурри пире, арҫынсене, вӑйлӑрах пулма, ырӑ ӗҫсем тума хистет. Хӗрарӑмсен ҫепӗҫ кӑмӑлӗ, тимлӗхӗ, чӑтӑмлӑхӗ, ачисене ӑса вӗрентсе калаӑ сӑмахӗсем пурнӑҫра питӗ пӗлтерӗшлӗ. Шӑпах амӑшӗ пепкине мӗн пурнӑҫ парнеленӗрен унӑн сывлӑхӗшӗн, аталанӑвӗшӗн тимлет, тӗпренчӗкне ырӑ ӗҫ тума, Тӑван ҫӗр-шыва юратма вӗрентет.

Уяв ячӗпе йышӑнса илсемӗр сире юратса тата хисеплесе калаӑ чи ырӑ та ӑшӑ сӑмахсене. Сӑн-питӗрте сирӗн яланах ӑшӑ кулӑ ҫиҫтӗр. Ырлӑх, ҫирӗп сывлӑх, телей сире!

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийӗн пуҫлӑхӗ.**

## Тивӗҫлӗ йышӑнусем турӗҫ

**Лару**

Депутатсен районти Пухӑвӗн черетлӗ 25-мӗш ларӑвӗ мартӑн 5-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче ӗҫлерӗ.

Депутатсем ларура пӑхса тухма кун йӗркине 7 ыйту кӗртме йышӑнчӗҫ.

1. Муркаш районӗн 2012 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен.

2. Депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн 2012 ҫулхи декабрӗн 6-мӗшӗнчи С-23/3 № «Муркаш районӗн 2013 ҫулхи тата планланӑ 2014 – 2015 ҫулсенчи тапхӑрти бюджечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

3. Депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн 2012 ҫулхи сентябрӗн 6-мӗшӗнчи С-21/5 № «Чӑваш Республикинчи Муркаш районӗнчи бюджетри право хутшӑнӑвӗсене йӗркелемелли положение ҫирӗплетесси ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

4. «Пурӑнмалли ҫурт-йӗр» федераллӑ тӗллевлӗ программӑн «2011 – 2015 ҫулсенче ҫамрӑк ҫемьесене пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе тивӗҫтересси» подпрограммине тата «Ялсен 2013 ҫулченхи социаллӑ аталанӑвӗ» федераллӑ тӗллевлӗ программӑна пурнӑҫа кӗртессин полномочийӗсен пӗр пайне пурнӑҫлама пуҫӑнасси ҫинчен.

5. Депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн 2010 ҫулхи мартӑн 11-мӗшӗнчи С-39/8 № «Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑх пурлӑхне тӳлевсӗр майпа Ярславка ял тӑрӑхӗн харпӑрлӑхне парасси ҫинчен» йышӑнӑвне пӑрахӑҫласси ҫинчен.

6. Депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн 2012 ҫулхи июлӗн 13-мӗшӗнчи С-10/7 № «Муркаш районӗн территорийӗнче строительствӑпа ҫыхӑнман тӗллевпе ҫӗр участокӗсем уйӑрса памалли йӗрке ҫинчен» положени пирки» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

7. Газ хуҫалӑхӗн объекчӗсене Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхӗнчен тӳлевсӗр майпа Чӑваш Республикин патшалӑх харпӑрлӑхне парасси ҫинчен.

Пӗрремӗш, иккӗмӗш тата виҫҫӗмӗш ыйтусемпе ларура район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Р. Ананьева пӗлтернине итлерӗҫ. Тӑваттӑмӗш ыйтупа район администрацийӗн капиталлӑ строительство тата обществӑлла инфраструктурӑна аталантарассин пайӗн тӗп эксперт специалисчӗ О. Тимофеева, пиллӗкмӗш, улттӑмӗш тата ҫиччӗмӗш ыйтусемпе район администрацийӗн пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ И. Захаров тухса каларӗҫ.

Депутатсем кун йӗркине кӗртнӗ ыйтусене сӳтсе явса тивӗҫлӗ йышӑнусем турӗҫ.

**Хамӑр инф.**

**Республикӑра**

## Хаксене виҫесӗр ӳстерме юрамасть

Ҫӗр-шыв Президенчӗ Владимир Путин иртнӗ эрнере хӑш-пӗр регионта коммуналлӑ тӳлевсен виҫи тӑруках темиҫе хут пысӑкланни пирки ҫивӗч калаҫу пуҫарнӑччӗ. Ҫавна май Республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Правительство членӗсемпе, федераци ведомствисен территори органӗсен тата муниципалитетсен ертӳҫисемпе эрнесерен ирттерекен канашлура иртнӗ тунти кун шӑпах коммуналлӑ пулӑшу ӗҫӗсен тарифӗсемпе ҫыхӑннӑ тема тӗп вырӑнта пулчӗ.

Михаил Васильевич палӑртнӑ тӑрӑх Президент асӑннӑ регионсенче тӳлевсем 2 – 2,5 хут ӳснӗ. Вӗсемпе танлаштарсан пирӗн лару-тӑру йӗркеллӗ темелле. Яллӑ районсенче ку енӗпе ҫивӗчлӗх ҫук, анчах хуласенчи хӑш-пӗр управляющи компани тӳлевсен виҫине 30 процент таран пысӑклатнӑ. Лару-тӑру ҫивӗчлӗхне кура влаҫсем хаксене ӳстерессипе ҫыхӑннӑ йышӑнӑва чарса раштаври хаксем патне таврӑнассине ҫирӗплетнӗ. М. Игнатьев ӗҫпуҫа ҫирӗп сӑнаса тӑмаллине пайӑррӑн палӑртнӑ.

Пӗтӗмӗшле илсен, лару-тӑру ҫивӗч мар пулин те, ЖКХри тӳлев ыйтӑвӗсене ҫӳллӗ шайра тепӗр хут тишкерни пӗртте ытлашши мар – канашлура ҫакӑ куҫ кӗрет ҫирӗпленчӗ. Влаҫсем ку ыйтусене куҫран вӗҫертменни хаксем ӗрӗхсерен сыхланма пулӑшасси иккӗлентермест.

**Йышӑну**

## Ҫул-йӗре ватар мар

Район администрацийӗ 2013 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗнче «2013 ҫулта мелсӗр ҫанталӑк условийӗсене кура вырӑнти пӗлтерӗшлӗ пурте усӑ куракан автомобиль ҫулӗсемпе транспорт ҫӳретессине вӑхӑтлӑх чакарасси ҫинчен» 368 № ятарлӑ йышӑну тунӑ.

2013 ҫулхи апрелӗн 7-мӗшӗнчен тытӑнса 2013 ҫулхи майӑн 6-мӗшӗччен транспорт хатӗрӗсене вӗсем тиевпе е тиевсӗр пулнине пӑхмасӑр кашни ось ҫине тиекен йывӑрӑш виҫине кура (переченьре палӑртнӑ) ҫӳреме вӑхӑтлӑх чараҫҫӗ.

2013 ҫулхи июнь уйӑхӗнчен тытӑнса 2013 ҫулхи август уйӑхӗччен сывлӑш температури кӑнтӑрла 32 градусран иртнӗ чухне Муркаш районӗн территорийӗнчи пурте усӑ куракан автомобиль ҫулӗсемпе йывӑр тиевлӗ груз турттармалли автотранспорт хатӗрӗсене ҫӳреме вӑхӑтлӑх чараҫҫӗ.

**Ӗненекенсене пӗлме**

## Святойсен ӳчӗсене илсе килеҫҫӗ

Паян Шупашкара Святой Лука (Войно-Ясенецкий) турӑшӗпе пӗрле унӑн ҫӗрмен ӳчӗн пайӗсене (мощи), Чӗрӗлӗх паракан Таса Хӗрсӗн пайне, манах пулнӑ тата асапланнӑ Елизавета княгинян ҫӗрмен ӳчӗн пайӗсене, ҫавӑн пекех Варвара манахӑн ҫӗрмен ӳчӗн пайӗсене илсе килеҫҫӗ. Вӗсене Пукрав-Татиана соборӗнче вырнаҫтараҫҫӗ.

Святойсен ҫӗрмен ӳтне хисеплесси вӗсем темӗн тӗрлӗ хӑватсем кӑтартма пултарнипе ҫыхӑннӑ. Тепӗр майлӑ каласан Святойӑн Турӑран илнӗ ырлӑхӗ унӑн ҫӗрмен ӳтӗнче упранать. Чи малтанах Святойӑн ҫӗрмен ӳчӗ тӗрлӗ чир-чӗртен сиплет тата усал сывлӑша этемрен хӑваласа кӑларма пултарать.

Святой Лука пурӑннӑ вӑхӑтра медицина профессорӗ, унпа пӗрлех Православи чиркӗвӗн епископӗ те пулнӑ. Турра нихӑҫан та ӗненме пӑрахман. Святой Лука (Войно-Ясенецкий) турӑшӗпе пӗрле унӑн ҫӗрмен ӳчӗн пайӗсем Шупашкарта мартӑн 17-мӗшӗччен пулаҫҫӗ, ытти сӑвапсем Пукрав-Татиана соборӗнче юлаҫҫӗ.

**Хамӑр инф.**

**Йыхрав**

## Хӗл ӑсатӑвӗн уявӗсене чӗнетпӗр

**Хӗл ӑсатӑвӗн уявӗсене Муркашра мартӑн 9-мӗшӗнче, Мӑн Сӗнтӗрте мартӑн 10-мӗшӗнче иртттереҫҫӗ. Уяв мероприятийӗсем 11 сехетре пуҫланаҫҫӗ.**

**Уявсенче районти хӗрарӑмсене числӗҫ, художество пултарулӑх коллективӗсем ташӑ-юрӑпа савӑнтарӗҫ, спорт ӑмӑртӑвӗсем иртӗҫ, кӳлнӗ лашасен конкурсӗсем пулӗҫ, суту-илӳ тата обществӑлла апатлану предприятийӗсем хӑйсен продукцине сӗнӗҫ.**

**Пурне те уява йыхравлатпӑр!**

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвне хаклатпăр

# Ял хуçалăхĕ патшалăх хӳттинче пултăр

***Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвне хакласси малалла пырать. В. Ананьев, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕпе муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳçи ку тĕлĕшпе хăйĕн шухăш-кăмăлне çапларах палăртрĕ:***

– Эпĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев Патшалăх Канашне тата халăх патне янакан «Тăван ен ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлер, саккуна пăхăнса, таса чунпа пурăнар» Çырăвне патшалăх шайĕнчи ĕç-хĕле пĕтĕмлетни тата малашлăх утăмĕсене уçăмлатни, пирĕн ума пысăк тĕллев лартни вырăнне хурса хаклатăп. Ăна тишкерни май малашне татах ытларах тимлемеллине куратăп, вăл пирĕнтен курăмлă кăтартусем кĕтет.

Чăваш Ен экономикишĕн, вăл шутра Муркаш районĕшĕн те агропромышленность комплексĕ пĕлтерĕшлĕ отрасль шутланать. Ял хуçалăх производствин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – унăн тупăшлăхне ӳстересси.

Республика Пуçлăхĕн хушăвĕсемпе килĕшӳллĕн районта экологи тĕлĕшĕнчен пахалăхлă апат-çимĕç туса илессине, унпа усă курассине ытларах аталантарасси тĕпре тăрать. Агропромышленность комплексĕн предприятийĕсем, тĕрлĕ формăллă хуçалăхсем умĕнче кунта пăхса ӳстерекен тата туса илекен продукцие сертификацилесси малалла пырать.

Расçей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ май экономика конкурентлăхне ӳстерме, хамăр продукцие тĕнче рынокĕ валли хатĕрлеме вĕренме хистет, çакă вара эпир ĕçлеме пултарăслăха тĕрĕслет.

Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем тата ял хуçалăх предприятийĕсенче вăй хуракансем патшалăх шайĕнчен уйăракан тĕрлĕ пулăшăва туяççĕ пулĕ. Унсăр вара асăннă отраслĕн ĕç-хĕле кирлĕ пек пурнăçлама йывăртарах пулнă пулĕччĕ. Иртнĕ çул республика шайĕнче ял хуçалăхĕнче тăрăшакансем валли 2,11 миллиард тенкĕ укçа уйăрнă. Çавна май пирĕн район патшалăх шайĕнчи пулăшупа иртнĕ çул 117 млн та 754 пин те 512 тенкĕлĕх усă курчĕ. Палăртмалла, çакă ял хуçалăхĕнче тăрăшакансемшĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Çавăн пекех çак саманта асăнас килет, малашне тĕрлĕ субсиди уйăрасси ĕç пахалăхĕнчен, кăтартăвĕнчен ытларах килĕ. Малашнехи пурнăç пирĕн ĕçлеме пултарăслăха тĕрĕслет, малти вырăнта эффективлăх пулмалла.

Михаил Васильевич Çырура пирĕн район территорийĕнче вырнаçса ĕçлекен организацисене те ырă енчен асăннăшăн хăвармарĕ. «Шупашкарти «Сеспел» предприяти» тата «Путь Ильича» агрофирма» анлă проектсемпе ăнăçлă ĕçленине палăртрĕ. Çĕнĕ технологисене тухăçлăн ĕçе кĕртесси, тăкаксене чакарасси, ĕç тухăçлăхне ӳстересси пысăк ăсталăхлă ĕçченсем пурри-çуккинчен ытларах килнине асăнчĕ.

Çавăн пекех вăл пирĕн района ӳпкелерĕ, ял хуçалăх тĕллевлĕ çĕрсемпе усă курассинче саккуна пăснă тĕслĕхсем пуррине пĕлтерчĕ. Чăнах та ку тĕлĕшпе районта спекуляци тăвакансем пулчĕç. Çавăнпа та муниципалитет тата уйрăм çын харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкĕсемпе спекуляци тăвассипе çыхăннă тĕслĕхсене тĕпрен пĕтермелле пирĕн. Тĕп тĕллев – вĕсен ултав-суя çул-йĕрне татасси, çĕр лаптăкĕсемпе усă курма ирĕк паррисен ыйтăвне вăхăтра тивĕçтересси. Вăл хăй Çырăвĕнче çĕрпе çыхăннă ыйтусемпе малашне те саккуна пăсакан кирек кам тĕлĕшпе те, унăн статусне пăхмасăр, çирĕп право йышăнăвĕсем палăртмаллине асăнчĕ.

Республика Пуçлăхĕ влаç органĕсем умне инвестици илĕртӳлĕхне ӳстересси пирки çивĕч тĕллев лартрĕ. Çавна май хăй çине яваплăх илме, экономика аталанăвне укçа-тенкĕ хывма, хăйĕн ĕçне йĕркелеме, хамăр патри çынсемшĕн ĕç вырăнĕсем сĕнме хатĕр пуçаруçăсене хапăл тумалла пирĕн. Кунта каллех çӳлерех асăннă организацисен тăрăшулăхне палăртас килет. Вĕсемсĕр пуçне район территорийĕнче пысăк хăватпа ĕçлекен предприятисем вăй илеççĕ, хăйсен хатĕр продукцине ют çĕршывсене те ăсатаççĕ. Инвестици ĕç-хĕлне хастарлатма муниципалитет харпăрлăхĕнчи ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсем çинчен пĕлтерекен даннăйсен пĕрлехи бази йĕркеленет.

Çĕр ыйтăвĕ – кăткăс ыйтусенчен пĕри. Çавна май халăха патшалăх тата муниципалитет пулăшăвне парассин пахалăхĕ тата унпа усă курмалли майсене хальхинчен те лайăхрах тивĕçтерес тĕллевпе нумай функциллĕ центр «пĕр чӳрече» мелĕпе ĕçлеме пуçларĕ. Çĕр тата ытти кăткăс ыйтусемпе документсем хатĕрлессипе шăпах çак центрта пулăшаççĕ. Çитес çулсенче асăннă центр граждансен 90 процентне тĕрлĕ услугăпа тивĕçтерме тĕллев лартать.

Михаил Васильевич патшалăх тата муниципалитетăн инженери инфратытăмĕпе тивĕçтернĕ çĕр лаптăкĕсене пурăнмалли çурт-йĕр лартма уйăрса пани вырăнлă пулнине çирĕплетет. Çавна май вăл пирĕн ума пысăк тĕллев лартрĕ. Муниципалитет харпăрлăхĕнчи çĕрсен резервне йĕркеленĕ май çурт-йĕр лартакансене çав çĕрсенчен эконом класлă йӳнĕрех çурт-йĕре комплекслă майпа лартма çĕр лаптăкĕсем уйăрса пама сĕнчĕ. Паянхи куна çавна валли Москакасси тата Çатракасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче çĕр лаптăкĕсем хатĕрленĕ. Çавăн пекех ытти ял тăрăхĕсенче те ку енĕпе тимлеççĕ.

Уйрăмах çак саманта палăртса хăварас килет: «...моральпе кăмăл-сипетĕн тĕп паллисем – чĕре ăшши, ырă кăмăллăх, тимлĕх, ыттисене хисеплени – çинче никĕсленсе тăракан «чун экологине» сыхласа упрасси пысăк пĕлтерĕшлĕ». Çак паха енсем пирĕнте нихăçан та ан иксĕлччĕр. Хӳтлĕх кирлĕ çынна тимлĕх уйăрар, пулăшу ыйтакана алă тăсса парар, ултавлă çулпа каякана тĕрĕс çул кăтартар, пирĕнте яланах çынлăх туйăмĕ пулмалла.

Михаил Васильевич пирĕн ума лартнă тĕллевсене çине тăрса пурнăçламалла – çакă пĕрлехи ăнăçулăхпа çыхăннă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

Районти шкулсенче



# Пĕлӳ парасси – пархатарлă ĕç

***Хăйсем суйласа илнĕ çула тĕрĕс тесе шутлаççĕ эсир сăн ӳкерчĕкре куракан вĕрентекенсем. Кашниĕнĕн ĕç стажĕ пысăк, анчах вĕсемпе ирттернĕ кĕске калаçура хĕрарăмсенчен нихăшĕ те хăйсен ĕçне ӳпкелемерĕ. Апла пулсан пархатарлă ĕçре вăй хуракансем ялта пурăнакансемшĕн те, ыранхи куна пăхакан ачасемшĕн те – ырă тĕслĕх. Сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла Нискассинчи вăтам шкулти çак вĕрентекенсене куратăр: пуçламăш классене 29 çул пĕлӳ алăкне уçса паракан Людмила Михайловна Иванова, ют çĕр-шыв чĕлхине 30 çула яхăн вĕрентекен Лидия Михайловна Чернова, ачасене вулама-çырма вĕрентес ĕçе 30 çул каялла кӳлĕннĕ Леонила Борисовна Чернова тата пуçламăш классене 20 çул вĕрентекен Лия Петровна Петрова.***

***Хăвăрăн та, эсир вĕрентекен ачасен те яланах ăнăçу пултăр!***

**А. БЕЛОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвне сӳтсе яватпăр

# Шкул ачисем те айккинче юлмаççĕ

***Районти библиотекăсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Патшалăх Канашне янă çулленхи Çырăва сӳтсе явас ĕçсем анлă сарăлнă.***

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвĕ кашнинех пырса тивет. Çавна тĕпе хурса библиотекăсенче асăннă темăпа информаци выставкисем йĕркеленĕ, тĕл пулусем иртеççĕ, Çырупа çыхăннă тĕрлĕ темăсене сӳтсе яваççĕ, тематикăсене кура хатĕрленĕ сайтсем тăрăх виртуаллă экскурсисем йĕркелеççĕ.

Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра çак кунсенче «Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Çырăвне тишкеретпĕр» темăпа информаци сехетне иртерттĕмĕр. Унта Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта 10 «б» класра вĕренекенсем хутшăнчĕç.

Мероприятие иртернĕ май тĕп библиотекăра вăй хуракансем ачасене хăйсем хатĕрленĕ электронлă презентаципе паллаштарчĕç. Ăна вара Çырура ĕç тăвакан влаç органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем умне лартнă задачăсем тăрăх хатĕрленĕччĕ. Кусем вĕсем, чи малтанах – регионсен инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерессипе çыхăнисем.

Макроэкономика кăтартăвĕсем ӳссе пынипе пĕрлех республикăра пурăнакансен пурнăç шайĕпе унăн пахалăхĕ те ӳссе пыма тивĕç. Çынсен сывлăхне сыхласа хăварасин, тĕрлĕ чирсемпе чирлессине асăрхаттарассин, республикăра пурăнакансене спорта явăçтарассин тата сывă пурнăç йĕркине тытса пыни епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнлантарассин ыйтăвĕсене уйрăмах пысăк вырăн уйăрнă. Библиотека ĕçченĕсем Михаил Игнатьевăн Çырăвĕн тĕп енĕсене туллин уçса пама тăрăшрĕç, хăш-пĕр тезиссем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕç.

Информаци сехечĕн вĕçĕнче вĕренекенсем анкета ыйтăвĕсем çине хуравласа хăйсен шухăшĕсене палăртрĕç, Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвĕн тата асăннă мероприятин пĕлтерĕшне хакларĕç, ку пĕлӳ хăйсене малашне професси суйласа илес тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине çирĕплетрĕç.

**Е. РОМАНОВА,**
**Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăн йĕркелӳпе методика секторĕн заведующийĕ.**

# Ертсе пыракан компание палăртрĕç

Ял тăрăхĕсенче

**Нумаях пулмасть Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Ярапайкасси ялĕнчи Молодежная урамри нумай хваттерлĕ 1-мĕшпе 2-мĕш çуртсенче пурăнакан хваттер хуçисен пĕрлехи пухăвĕ пулчĕ. Асăннă пухăва ял тăрăхĕн пуçарăвĕпе иртерчĕç.**

Пухăннисем умĕнче пĕрлехи тĕп задача асăннă çуртсене пăхса тăрасси мелне палăртасси пулчĕ. Пуху ĕçне Муркаш районĕнчи чиккĕллĕ яваплăхлă «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» обществo юрисчĕ С. Феофанов, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн ертӳçи С. Тимофеев тата ыттисем те хутшăнчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата общестăвалла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ В. Никитин саккунпа килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсене пăхса тăрассине йĕркелемелли майсем, кашни тĕсĕн уйрăмлăхĕсемпе лайăх енĕсем çинчен каласа пачĕ.

Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ А. Чернова нумай хваттерлĕ çуртсене пăхса тăрассине ертсе пыракан компани формипе йĕркелеме сĕнчĕ. Пухăннисем унăн сĕнĕвĕпе пĕр саслă пулса килĕшрĕç.

Муркаш районĕнчи чиккĕллĕ яваплăхлă «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» обществo ертӳçи Н. Любимов хăйсем нумай хваттерлĕ çуртa пăхса тăрассин условийĕсемпе паллаштарчĕ. Владимир Германович çуртăн ертсе пыракан компанийĕ пулма Муркаш районĕнчи чиккĕллĕ яваплăхлă «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» обществăна суйлама, хваттер хуçисене кашнинех ку предприятипе килĕшӳ тума сĕнчĕ. Хваттер хуçисем кунпа килĕшнине пĕлтерчĕç.

Пĕрлехи пуху иртерессипе пирки пĕлтерӳсене тĕрлĕ йышăнусене вырнаçтармалли вырăна палăртрĕç. Ку вăл – çуртсен информаци стенчĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсенчи харпăрлăх хуçисен пĕрлехи пухăвĕсен протоколĕсемпе йышăнăвĕсем вара малашне Ярапайкасси ял тăрăхĕн администрацийĕнче упранĕç.

**Н. ПЕТРОВА,**
**Ярапайкасси ял тăрăхĕн администрацийĕн инспекторĕ.**

# Усăлли – кашнин валли

Шетмĕпуçĕнчи ял библиотекинче тĕл пулу йĕркелерĕмĕр. Унта тĕрлĕ ӳсĕмри вулавçăсем хутшăнчĕç. Пухăннисемпе Михаил Игнатьевăн «Тăван ен ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлер, саккуна пăхăнса, таса чунпа пурăнар» Çырăвне сӳтсе яврăмăр. Чылайăшĕ Çыру пирки хăйĕн шухăшне пĕлтерме кăмăл турĕ. Çаплапĕтĕмлетӳ тума май килчĕ: Чăваш Ен Пуçлăхĕ пирĕн ума чăннипех те пĕлтерĕшлĕ задачăсем лартать, вĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртесси вара кашниннех килет.

Çырура республика промышленноçне, ял хуçалăхне аталантарассине тивĕçтермелли майсем пирки чылай каланă, социаллă ыйтусене татса парасси çине те пысăк тимлĕх уйăрнă. Тĕрĕссипе республика Патшалăх Канашне янă Çыру республикăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕсене палăртакан документ пулса тăрать.

Ветерансене, инвалидсене, нумай ачаллă çемьесене паракан çăмăллăхсем сыхланса юлмалла. Кунпа пĕрлех бюджет сферинче вăй хуракансен ĕç укçине тапхăр-тапхăр палăрмаллах ӳстермелле. Çул-йĕр пахалăхне ӳстересси, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ те тухăçлă усă курасси те паянхи куншăн пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Çак ыйтусем кун йĕркинчен тухмалла мар.

Экономикăна квалификациллĕ кадрсемпе тивĕçтерессипе ытларах тимлемелле пулать. Тĕрĕссипе кирлĕ кадрсем хатĕрлеме тытăнас ĕçе ача садĕнченех пуçăнмалла. Сăмах кунта уйрăм ачан пултарулăх енне шыраса тупса малалла аталантарса пырасси пирки пырать.

Республика Пуçлăхĕ кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнсах республикăра 3 çултан тытăнса пур ачана та шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вырăнпа тивĕçтерме задача лартать. Ку та питĕ пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать.

**В. НИКИТИНА,**
**Шетмĕпуçĕнчи ял библиотекин заведующийĕ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Ишмула ялĕнче çуралса ÿснĕ, унтах пурăнакан **Владимир Данилович БЕЛОВА** 50 çулхи юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пирĕнпе юнашар пулнишĕн эпир савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр. Малашнехи çулу та такăр, тикĕс пуласса шанатпăр. Вăрăм ĕмĕр пурăнма ăшă кăмăл, юрату, хăвна та, çемйӳне те çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, хунямăшĕпе хуняшшĕ, Шашковсен, Архиповсен çемйисем, пускилсем, юлташсем.**

Хаклăран та хаклă чи юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, хисеплĕ тăхлачăна, ырă кăмăллă тăванăмăра – Çĕньял Шурчара пурăнакан **Раиса Ивановна ФЕДОРОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.



Сан яту паян хисеплĕ<br>
Пултăр çавăн пек ялан.<br>
Кĕрекÿ хаваслăн кĕрлĕ,<br>
Ырă сунĕ тус-тăван.<br>
Çемьепе пĕрле сунатпăр<br>
Çутă ĕмĕт те телей.<br>
Кăмăлтан хушса калатпăр –<br>
Савăк иртĕр юбилей.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, 5 мăнукĕ, аппăшĕсем, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă юратнă çыннăмăра – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Тамара Николаевна ТЕРЕНТЬЕВĂНА** чаплă çавра çулĕпе мĕн пур ăшă туйăмпа саламлатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – чи хаклă çын, тавах сана пуриншĕн те. Ялanах хаваслă та ырă, кăмăллă пул, чир-чĕр мĕнне ан пĕл. Мĕн ĕмĕтленни çитсе пытăр, çын хушшинчи хисепĕр нихăçан та ан иксĕлтĕр, çăл куç таппиллĕ вăй-хал, ырлăх-сывлăх, пуянлăх сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр, умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, Николаевсем, Порфирьевсем, Михайловсем, Порфирьевсем, ял-йыш, пускилсем.**



Мартăн 10-мĕшĕнче Карманкасси ялĕнче пурăнакан **Маргарита Евгеньевна НИКОЛАЕВА** 55 çул тултарать. Эпир ăна юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăвансемпе тата ĕçтешсемпе яланах савăнса, килĕштерсе пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, кĕрÿшĕ, 2 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, Карповсен çемйи.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Нина Александровна БОРИСОВĂНА** 60 çулхи сумлă юбилей ячĕпе чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ытарайми çыннăмăр, тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, йывăр вăхăтра пире пулăшнăшăн, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăç. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Малашнехи пурнăçра çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, тăнăç пурнăç, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем тата мĕн пур çывăх тăванĕсемпе пускилĕсем.**



Хаклăран та хаклă тăванăмăрсене – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Елизавета Федоровна ФЕДОРОВĂНА** тата Отарккă ялĕнче пурăнакан **Тамара Николаевна ТЕРЕНТЬЕВĂНА** юбилейĕсем ячĕпе чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, инçе çул пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр.



Мĕн тери уяв вăл – юбилей,<br>
Пурнăçра ан иксĕлтĕр телей!<br>
Пурнăç çулĕ тăрăх çирĕп утăр,<br>
Чĕрере хĕмлентĕр сÿнми вутăр!

**Саламлаканĕсем: Федоровсен тата Соколовсен çемйисем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра – Туçи Олкашра пурăнакан **Эльза Владимировна МИХАЙЛОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Санпа эпир савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр, пурнăç çулĕ тикĕс пуласса шанатпăр. Эпир сана вăрăм ĕмĕр, телейлĕ пулма сунатпăр, ырлăх-сывлăхлă пулма сĕнетпĕр. Эсĕ яланах çавăн пек хитре те ырă кăмăллă пул.

**Салампа: Беловсен, Ярыковсен, Фадеевсен çемйисем, тус-юлташĕсем, пускил-тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă юратнă ырă кăмăллă аннене, кукамая, асаннене, хунямана – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Евдокия Даниловна ОСИПОВĂНА** 94 çул тултарнă ятпа тата çывхарса килекен Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе мĕн пур ăшă туйăмпа саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – ырă тĕслĕх, эпир сана чунчĕререн юрататпăр, хисеплетпĕр, пире пулăшса тăнăшăн, тăван кил ăшшине упраса пурăннăшăн сана чĕререн тав тăватпăр. Иван Осиповичпа пĕрлешсе 9 ача çуратса пăхса ÿстерсе, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Каç пулсан – канăçлăхпа, ир пулсан пуласлăхпа пурăнма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе ывăлĕ, кинĕсемпе кĕрÿшĕсем, 25 мăнукĕ, 37 кĕçĕн мăнукĕ тата кĕçĕн мăнукĕн ывăлĕ Егор.**



Пирĕн юратнă çыннăмăра – Тренккăра пурăнакан **Евдокия Гавриловна МОРОЗОВĂНА** 75 çулхи сумлă юбилейпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр сана. Ырă кăмăлушăн, пире пулăшса тăнăшăн тав сăмахĕ калатпăр. Эсĕ пирĕнпе пулнăшăн эпир яланах савăнатпăр, хамăра тĕреклĕрех туятпăр. Эпир сана хытă юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Ăшă салампа: Дипломатовсен, Морозовсен çемйисем, çывăх тăванĕсем, пускилсем.**

# Упрасчĕ сире, хĕрарăмсем!

Ачана ĕçе чи малтанах амăшĕ вĕрентет. Эпĕ ас тăвасса мана та чи пысăк ĕç малтан анне хушнăччĕ – анкартинче кантăр акнă лаптăка çерçисемпе чанасенчен хуралламаллаччĕ. Чим, йĕркипе каласа парам.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче (эпĕ вăл вăхăтра анчах ĕçлеме пуçлакан ача пулнă-ха) килти хуçалăхсенче тĕрлĕ тырăпулă, кантăр та акатчĕç. Вĕсене вара тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк ирпе ирех тапăнатчĕ.

Кантăр аксан тепĕр кунне хĕвел тухиччченех анне мана, 6 çул тултарайманскере, ыйхăран вăратрĕ те кантăр лаптăкĕ çине хурала илсе тухрĕ. Ана çинче пĕр кайăк та пулмалла мар ĕнтĕ. Кантăрне вара çерçисем питĕ юрататчĕç. 4 – 5 кунтан, тымарланса шăтма пуçăнсан, ун пекех сăтăр кÿреймеççĕ-ха. Анчах та унччен хураллamалла. Вăт çав ĕçе эпĕ пурнăçларăмах вĕт. Аппа та мана ĕçе хăнăхтарса пычĕ. Вăл манран 4 çул аслăрахчĕ.

Тепĕр çулхине мана колхоза кок-загыз анине çум курăкран тасатма илсе кайрĕç. Çук, ĕç кунĕшĕн мар. Районтан килекен агроном шоколадлă канфет паратъ иккен: пĕр кун ĕçленĕшĕн – 3 штук. Кунта ачасем çеç ĕçлéттĕмĕр. Çапла 1 гектар лаптăка эрнерен тасатса тухаттăмăр. Халĕ ку ÿсен-тăрана тĕнчипе те акса тумаççĕ пулĕ. Мĕншĕн тесен резина тума урăх материалсемпе усă кураççĕ. Ун чухне вара кок-загызне шăпах резина тума юрăхлă тымарĕшĕн çитĕнтеретчĕç.

Мăнакка вĕрентсе каланине те ас тăватăп. Вăл çынпа икĕ тĕрлĕ калаçма пулать тетчĕ. «Ну, мĕнле пурăнатăн-ха?!» тесе кăшкăрса е тата çепĕççĕн «Мĕнле пурăнатăр-ха?» тесе. Унăн вăталăх хĕрĕ вара мана вĕрентсе пурнăçа йĕркелеме пулăшрĕ тесен те йăнăш пулмасть.

Вăтам шкултан вĕренсе тухсан пĕр çул колхозра ĕçлерĕм, кÿршĕри трактористан пулăшканĕ пултăм. Ун чухне вĕсене плугарь тенĕ. Мĕншĕн тесен сухапуç çинче ларса çÿреме вырăнĕ те, тытса пыма рулĕ те пурччĕ. Халĕ питĕ кулăшла та, анчах та сухапуçне рульпе тытса пымаллаччĕ.

Çавна пĕлсен мана иккĕмĕш сыпăкри аппа (вăл техникумран вĕренсе тухнăччĕ те бухгалтерта ĕçлетчĕ) каларĕ: «Урăх, малалла вĕренме каймастăн пулсан, эсĕ чи-чи слабăй çын пулатăн», – терĕ.

Мĕн тетĕр, Шупашкара электроаппарат заводне ĕçе вырнаçрăм та ун çумĕнчи техникума вĕренме кĕме хатĕрленме тытăнтăм. Анчах та Совет Çарне хĕсмете кайма ят тухрĕ.

Çапла, хĕсметре 2 çул та 7 уйăх пулнă хыççăн Чăваш ял хуçалăх институтне (халĕ академи) вĕренме кĕтĕм, ял хуçалăх специалисчĕ пулса тăтăм.

Пĕррехинче тухтăр çапла каланăччĕ: «Хĕрарăм вăл – пуянлăх». Апла пулсан пуянлăха упрама пĕлмелле. Упрасчĕ сире яланах, хĕрарăмсем!

**Н. ПЕТРОВ.**

Нискасси ялĕ.

## Район администрацийĕнче

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2013 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 158 номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе çак ĕçченсене наградăланă:***

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:

– **Александр Владимирович ВАСИЛЬЕВА**, Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн вылăх-чĕрлĕх уйрăмĕн пуçлăхне;

– **Алевтина Анатольевна КРАСНОВĂНА**, Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн вылăх-чĕрлĕх пăхаканне;

– **Надежда Александровна СЕМЕНОВĂНА**, Чапаев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп бухгалтерне;

– **Людмила Владимировна ЛЬВОВĂНА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çатракассинчи сĕт ферминчи ĕнесене машинăпа сăвакан операторне;

– **Юрий Алексеевич ПАВЛОВА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çатракассинчи сĕт ферминчи вылăх пăхаканне;

– **Виталий Васильевич ФЕДОРОВА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн строительне;

– **Нина Пименовна ФЕДОРОВĂНА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çатракассинчи сĕт ферминчи ĕнесене машинăпа сăвакан операторне.

2. Строительство материалĕсем туса кăларас ĕçре нумай çул тухăçлă вăй хунăшăн:

– **Любовь Пантелеймоновна ДЕНИСОВĂНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен хупă обществин футеровщик-каменщикне;

– **Зоя Алексеевна ПЕТРОВĂНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен хупă обществин склад заведующине;

– **Альбина Львовна КИРПИЧНИКОВĂНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен хупă обществин садчицине.

# Пултарулăх çăл куçĕ иксĕлми

## Культура хыпарĕсем



Сăн ÿкерчĕкре: епле эреш, епле илем!

Турайри информаципе культура центрĕ çумĕнчи Анаткассинчи Культура çуртĕнче «Чечеклен, юратнă Турай ен» чаршав уçăлнипе пуçланчĕ кунти пултарулăх ушкăнĕсен концерчĕ. Пухăннисене Турайри, Анаткассинчи пултарулăх ушкăнĕсем, Мăн Токшкири «Тăванлăх» халăх пултарулăх ушкăнĕ хăйсен юрри-ташшипе савăнтарчĕç çав кун.

Концерт пуçланиччен пухăннисем умĕнче Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов тухса каларĕ. Вăл çак вăхăтчен ял тăрăхĕ туса ирттернĕ ĕçсем, умри задачăсем çинче чарăнса тăчĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев республика Патшалăх Канашне янă Çырупа Муркаш райпо канашĕн председателĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Б. Андреев тĕплĕн паллаштарчĕ.

Полицин участокри уполномоченнăйĕ Н. Кудряшов хăйĕн сăмахĕнче ял тăрăхĕн территорийĕнче тата районта саккунлăхпа йĕркелĕхе тивĕçтересси мĕнле пулса пыни çинче чарăнчĕ.

Кайран вара ял çыннисем хаваслă концерт пăхса савăнчĕç. Программа пуян, репертуарсенче çĕнĕ юрăсем те янăрарĕç.

Анаткассинчи Культура çуртĕнче çав кун йĕркеленĕ ал ĕçĕсен куравĕ те хăйĕн патне йыхравларĕ. Ку курава Çуткÿл, Турай, Анаткасси, Кĕçĕн Чураш, Çатракасси, Тушкасси ялĕсенче пурăнакан ăстаçăсен ал ĕçĕсене илсе пынă. Тĕрлĕрен мелпе эрешлесе илемлетнĕ кавирсем, панносем, минтер пичĕсем, тутăрсем – мĕн кăна çук пулĕ кунта?! В. Антонова, Э. Александрова, Е. Дмитриева, О. Журавлева, В. Иванова, Т. Иванова, В. Никандрова ĕçĕсем пурне те тыткăнларĕç. Вĕсен ĕçĕсене курсан чăннипех те юмах тĕнчине лекнĕн туйăнать. Ытти куравсенче те вĕсен ĕçĕсене яланах курма пулать. Çавăнпа та Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов хастар хĕрарăмсене тав сăмахĕ каларĕ, парнесем парса чысларĕ.

Турайри вăтам шкулта тата Анаткассинчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем те айккинче тăрса юлман. А. Герасимова тата В. Орлова ертсе пынипе вĕсем тĕрлĕ хатĕрсем ăсталаса курава илсе пынă. Анаткассинчи Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленĕ ăстаçăсен ĕçĕсемпе (ертсе пыраканĕ Н. Хрисанфова) паллашни те кашниччех ырă туйăмсем çуратрĕ.

**Г. АНДРЕЕВА,**
**Анаткасси библиотекин библиотекарĕ.**

## ГИБДД пĕлтерет

# Ачасем хăйсене хăрушсăрлăхра туйччăр

Ачасем хутшăннипе пулса иртекен аварисен шутне чакарас, административшăй йĕркене пăсассинчен асăрхаттарас тĕллевпе республикипех, çапла май пирĕн районта та, «Детское удерживающее устройство» ятпа ятарлă мероприяти çирĕплетнĕ ĕç планĕ тăрăх иртрĕ. Пирĕн инспекторсем водительсене тĕрĕсленипе пĕрлех пассажирсем хăрушсăрлăх мелĕсемпе мĕнле усă курнине пĕлсе тăрас тесе уйрăмах шкулсем тата ача сачĕсем çывăхĕнчи транспорт хатĕрĕсене тимлĕн тĕрĕслерĕç. Йĕрке пăсакансене административлă майпа явап тыттарчĕç. Ачасене вара машинăра хÿтлĕхре пулас тесен хăйсене мĕнле тытмаллине ăнлантарчĕç.

Машинăпа çула тухнă чух ачасене ятарлă условисем туса памаллине саккунпа çирĕплетнĕ. Тепĕр майлă каласан ачасене машинăна лартсан ятарлă креслосем, ларкăч çинче çирĕппĕн тытăнса тăма пулăшакан хатĕрсем пирки яланах асра тытмалла. Çул çинче пулма пултаракан инкексем, шел пулин те, ачасене те «тиркемеççĕ», çавăнпах хамăра тата ачасене хамăрăн сыхламалла.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**



# Чунри илемлĕх

Сăн ӳкерчĕкре эсир Оринин ялĕнче пурăнакан Фаина Александровăна куратăр. Халĕ вăл ку ял тăрăхĕнчи библиотека ертӳçинче тăрăшать, çĕнĕ ĕçе пуçăнни нумаях та вăхăт иртмерĕ, апла пулин те унăн тăрăшулăхĕ курăмлă.

Çапах та унăн пархатарне эпĕ урăх енĕпе куратăп. Фаина Петровна чăннипех те «пысăк» чĕреллĕ те сумлă хĕрарăм тата амăшĕ, ку пĕлтерĕше вара сăмахпа кăна палăртма йывăр. Ăна Турриех вăй-хăват пилленĕ пулĕ. Хăтлă çемьере улттăмĕш çул ĕнтĕ Кристина хӳтлĕхре. Ăна вĕсем хăйсем кăмăлланипе аякран илсе килчĕç. Хĕр ача халĕ саккăрмĕш класра пĕлӳ пухать. Ăшă та хăтлă çемье хапăл тунишĕн вĕççĕр-хĕрсĕр тав тăвать Кристина.

Фаина Петровнăпа Владимир Михайлович Александровсем – юрăкĕвĕ ăстисем. Тĕрлĕ концертпа вĕсем республикăра кăна мар, ун тулашĕнче те темиçе пулнă. Çавăнпа та пулĕ Кристина та ашшĕ-амăш ăсталăхне курса ӳсет. Халĕ вăл «Шуракăш» ансамбле çӳрет, ташлама ăста. Ăна вĕсем фортепиано та илсе панăччĕ. Фаина Петровна чылай çул шкулта ĕçленĕрен вĕрентӳ ĕçне яланах мала хурать. Ача тĕрлĕ енлĕ аталантăр тесе ырми-канми тăрăшаççĕ Александровсем. Кун-çул парнелекеннисем мар, пăхса ӳстерекеннисем сăваплă вĕт.

Çакна та пăлăртса хăварас килет. Тума пĕлмен ĕç Фаина Петровнăн чăнах та çуках пулĕ. Çуллахи вăхăтра вĕсен пахчине кĕрсе курасчĕ сирĕн, епле илемлĕ те хăтлă кунта. Ахальтен мар ĕнтĕ республика шайĕнчен те килсе курчĕç Александровсем патне. Пур енлĕ маттур хĕрарăм автомашинăпа çӳрет, çурт-йĕр купалама пултарать, пăчкă-мăлатук тытса вăл е ку япалана ăсталать, хĕрарăм ĕçĕ пирки асăнмăп та. Вĕсенчен те пĕлтерĕшлĕрехси вара – çемьене куç шăрçи пекех упрани. Мĕн кăна чăтса ирттермерĕ пулĕ вăл ку таранччен, йăлтах черченкĕ хул пуççийĕ çине тиеннĕ. Эпĕ ăна чылайранпа пĕлетĕп. Çапах та калаçу пурнăç кукримакрине кĕрсе тухсан, ирĕксĕрех куçăм шывланчĕ. Çемьери кашни çынна унăн тимлĕхĕпе хӳтлĕхĕ кирлĕ вĕт, шăпа тени хытах тĕрĕслерĕ курăнать ăна.

Ывăлĕ Ульяновскри фармаци колледжĕнчен вĕренсе тухрĕ. Халĕ медицина ĕçченĕ Муркашри тĕп больницăра вăй хурать, çамрăк специалист ăсталăхпа палăрать.

– Эпĕ хамăн мăшăра вĕççĕр-хĕрсĕр тав сăмахĕ калама тивĕç. Тунмастăп, хăш чухне кӳрентернĕ тата хаклама пĕлмен самантсем те пулнă пулĕ. Эсĕ вара йăлтах каçаратăн, – терĕ унăн мăшăрĕ В. Александров, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин композиторсен ассоциацийĕн членĕ мăшăрне тав тунă май.

**Р. МАКАРОВА.**

Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ – Наркобизнеспа тата наркомафипе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Йĕплĕ пралук леш енче пулнă, анчах...

***Наркотиксемпе психоактивлă япаласем пирĕн обществăшăн пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Вĕсен тĕтĕм-сĕрĕмĕпе пурăнакан хăйĕн тыткаларăшне контроллеме пултараймасть, çапла майпа çăмăллăнах тĕрлĕ преступлени çулĕ çине тăрать. Раççейре наркотик витĕмĕпе пурăнакан 2 миллион ытла çынна, Чăваш Енре 2900 çынна шута илнĕ, кусем – статистика кăтартăвĕсем кăна. Муркаш районĕнче те шута илнисем пур. Шухăшласа пăхар-ха, нарколог врач патне кайманнисен, учета тăманнисен хисепĕ еплерех-ши?***

***Тĕпрен илсен çак хăрушлăх серепине ытларах 18 – 30 çулти çамрăксем çакланаççĕ. Вылянчăк çулсенчисем çăмăлттайла шухăшлани, иккĕленӳллĕ тус-юлташпа çывăхланни çемьери тата обществăри лару-тăруран чылай килет. Юлашки çулсенче наркотик витĕмне лекнисен йышĕ ӳссех пырать. Çакна специалистсем общество тăнăçлăхĕпе социаллă çыхăнусем арканас туртăм вăйланма пуçланипе çыхăнтараççĕ.***

Никамшăн та вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, хăш-пĕр çыншăн пахчари мăкăнь чечекĕ те чăн-чăн иленӳ шутланать. Акă районти пĕр ялта ку тĕлĕшпе еплерех ĕç-пуç пулса иртнĕ. Хĕрĕх çула çывхаракан ӳсĕр арçын пĕр хуçалăхра асăннă чечекĕн типĕтнĕ улăмне тупнă. Унăн йывăрăшĕ 89,9 грамм чухлĕ пулнă. Раççей Федерацийĕн Правительствин постановленийĕпе килĕшӳллĕн вăл уйрăмах пысăк виçе шутне кĕрет, апла пулсан ку тĕлĕшпе саккун татах та çирĕпрех ыйтать.

Ку хутĕнче алкалоид опийĕпе киленме шухăшланă çынна Муркаш район сучĕ 2002, 2006, 2009 çулсенче айăпланă. Йĕплĕ пралук леш енче чылай вăхăт пулнăскер тĕрĕс çул-йĕрпе утма тĕлленмен те.

Преступлени тунă çын иртнĕ кун пирки çапларах каласа парать:

– Хам айăпа туллин йышăнатăп. Ирĕкрен хăтарнă вырăнта пулнă чухне тăтăшах хам пĕлĕш патне шăнкăравласа калаçаттăм. Сăмах-юмах тĕрлĕ енлĕ пулатчĕ. Пĕррехинче вăл мана мăкăнь чечекĕн улăмне пухни тата ăна никам та пурăнман хуçалăха хуни пирки пĕлтерчĕ. Хăй те унăн витĕмĕпех пурăнатчĕ те мана та аван ăнланнă пулĕ. Анчах та, питĕ шел, пĕлĕшĕн кун-çулĕ çак синкере пулах вăхăтсăр татăлчĕ, ытлашши пулчĕ пулас.

Эпĕ халĕ тăван тăрăхра пурăнатăп. Кунĕпех эпĕ тусюлташпа эрех ĕçрĕм, шухăшăм вара мăкăнь пиркиех пулчĕ. Çапла вара урампа утнă май пĕлĕшĕн малтанхи калаçăвне аса илтĕм. Нумаях та шухăшласа тăмарăм, çав хуçалăха кĕтĕм, мĕн шыранине тупрăм. Улăма хам çума чикрĕм те туссемпе сăйланма утрăм, – терĕ вăл следстви вăхăтĕнче.

***Наркотуртăмăн малтанхи тапхăрĕсене асăрхани пĕлтерĕшлĕ. Уйрăмах куçа курăнакан паллăсене асăрхăр.***

***Çамрăк çын хăйне ытти чухне килĕшнĕ япаласемпе кăсăкланмасть, вĕренӳре те улшăнать, халĕ вăл начар ĕлкĕрсе пырать.***

***Унăн кăмăлĕ тăтăшах улшăнать, апат-çимĕçе тиркеме пуçлать, мĕншĕн тесен аппетит çук. Кану вăхăчĕ те улшăннă, малтанхи вăхăта пăхмасăр çывăрать е çĕрле те çывăрмасть.***

***Куç шăрçи палăрмаллах пĕчĕкленнĕ е сарăлнă.***

***Унăн çывăх тус-юлташĕ те, калаçăвĕ те урăх. Халĕ вăл фармакологипе, килте упранакан аптечкăпа кăсăкланать.***

***Уйрăмах çакна асăрхăр – япаласем хушшинче шприцсем, пипеткăсем, пĕчĕк пакетсем пулма пултараççĕ!***

Çапла вара ку тĕлĕшпе суд пулчĕ, вăл РФ УК 228 статйинче пăхнă йĕркене сĕмсĕррĕн пăснине çирĕплетрĕ. Халĕ арçын преступленишĕн тивĕçлипех явап тытĕ. Асăннă ĕçĕн патшалăх айăплавçи район прокурорĕн çумĕ, юстици советникĕ Ю. Семенов пулчĕ.

Кунта вара çакна каласа хăвармалла. Пахчара ӳсекен мăкăне никам та асăрхаманни пулмасть пулĕ. Хăшĕсемшĕн вăл илемлĕ чечек кăна, теприсемшĕн – тепĕр майлă киленӳ. Çавăнпа та ăна асăрхасанах кăкламалла – унсăрăн çӳлерех асăннă йышшисем киленĕç. Тепĕр тесен вĕсем никам та пурăнман хуçалăхсене пыма пултараççĕ, ун пек чухне те курнă куçа курмăш тумалла мар, çийĕнчех ку енĕпе ответлисене пĕлтермелле.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Ырă кăмăллăх ан иксĕлтĕр

Обществăлла организацире

Инвалид категориллĕ çынсем пурри питĕ пăшăрхантарать. Анчах çак пĕлтерĕшпе пачах та усă курас килмест-çке. Шел пулин те, вĕсен вăйхалĕ ыттисен пек мар çав. Ку вăл – шăпа пӳрни, паллах. Апла пулин те эпир çирĕп чун-чĕреллĕ, кун-çула вара тăвата стена хушшинче ирттерес килмест, çынсем хушшине тухас килет. Тен çирĕп сывлăхлă çын мана ăнланмасть те. Ăна-кăна пăхмасăр хамăр йышшисем, çирĕп йăлана кĕнĕ тăрăх, кашни уйăхра пĕрре пĕрле пухăнатпăр, çапла вара сăмах çăмхи тĕрлĕ енлĕ сӳтĕлет. Çакăн пек тĕл пулусем пирĕншĕн питĕ кирлĕ, çапла майпа хамăр шухăш-кăмăла, савăнăçпа хуйха та пĕрле пайлатпăр. Пирĕн йыша пĕр чăмăра пухма пултарнăшăн вара хамăр организаци ĕçченĕсене тав сăмахĕ калас килет. Çавăн пекех пире ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотекăра вăй хуракансем те хапăл тăваççĕ. Вĕсен пире валли кирлĕ информаци кăна мар, вĕри чей те яланах тупăнать. Хăш чухне эпир хамăр тĕллĕн вулаймастпăр, ку чухне те çӳлерех асăннă ырă çыннăмăрсемех пулăшаççĕ.

Хамăн иртнĕ тапхăр пирки те асăнса хăварам. Сывлăх хавшанине пула реанимаци уйрăмĕнче тăхăр кун выртмалла пулчĕ. Тавах сывлăх сыхлавĕнче ĕçлекен ырă кăмăллă çынсене. Çапла вара вĕсем сипленипе хуллен утакан пултăм. Ачасем тата Дивеевăна икĕ хутчен илсе кайрĕç, çакă та мана пулăшнăн туйăнчĕ. Чир-чĕрĕ çумрах çӳрет иккен, каярах икĕ куçăма та операци тумалла пулчĕ. Çапла вара инвалид категорине эпĕ те куçрăм. Халĕ эпĕ Раççейри куç курманнисен Муркаш районĕнчи обществăлла организацийĕн членĕ. Асăннă организаци пирĕншĕн хăйне майлă реабилитаци центрĕ шутланать. Çавăнпа та манпа пĕр шухăшлă тата категориллĕ çынсене пирĕн йыша килме сĕнетĕп. Кунта пирĕн валли яланах ăшă сăмах тупаççĕ, пурăнма вăй-хал кӳреççĕ.

**Н. КУДРЯВЦЕВА.**



**Сăн ӳкерчĕкре: Раççейри куç курманнисен Муркаш районĕнчи обществăлла организацийĕн ертӳçи А. Михайлова пирĕншĕн ырми-канми тăрăшать. Ăна çуркуннехи пĕрремĕш уявпа организаци членĕсенчен хĕрӳллĕ салам.**

# «Супер хуняма» конкурс иртрĕ



Урамра çил-тăвăл алхаснине пăхмасăрах иртнĕ эрне кун, пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче, Орининти Культура çуртĕнче халăх йышлă пухăнчĕ. Хальхинче куракансене Оринин ял тăрăхĕн хастар хĕрарăмĕсем «Супер хуняма» тупăшура хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Акă вĕсем: Е. Никитина, Р. Ремнева, А. Иванова, Р. Горшкова, З. Галкина. Паянхи курав пуриншĕн те чăн-чăн уяв пулчĕ.

Чи малтанах Оринин ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи В. Васильева пухăннисене çуркунне çитнĕ ятпа саламларĕ. Конкурса хутшăнакансене вара ăнăçу сунчĕ. Ăсталăха хаклама сумлă жюри йĕркеленĕ.

Хунямасене конкурс пулассине маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та кашниех питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ. Конкурса йĕркелекен тата ертсе пыракан В. Васильева хатĕрленĕ ыйтусем çине тулли хуравсем шырарĕç. Хунямасем тĕрлĕ çи-пуçпа паллаштарчĕç, ача макăрсан епле лăплантармаллине те вĕрентрĕç. Хаклавçăсен умĕнче вĕсем чăваш йăли-йĕркине епле пĕлнипе, ăс-тăн çивĕчлĕхĕпе тупăшрĕç, юрă-ташăри ăсталăхпа паллаштарчĕç. Палăртса хăвармалла, асаннесемпе кукамайсене пулăшма вĕсен мăнукĕсем, хĕрĕсемпе кинĕсем те килсе çитрĕç, сăвă-юрă парнелерĕç, ăшă сăмахсем каларĕç.

Чăваш хĕрарăмĕ мĕн авалтанах сĕтеклĕ те тутлă çимĕç пĕçерме пултарнипе палăрса тăнă. Пирĕн тупăшăва хутшăнакансем те çакна хăйсем пĕçерсе килнĕ кукăль-пӳремечсемпе çирĕплетсе пачĕç. Вĕсем каланă тăрăх кукăлĕсене асламăшĕ-кукамăшĕсенченех вĕренсе юлнă вăрттăнлăхсемпе усă курса пĕçернĕ. Зоя Павловна вара жюри членĕсене тата курма килекенсене хăй вĕретсе килнĕ кăпăклă сăрапа сăйларĕ. Тăхтав вăхăтĕнче Орининти Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕн солисчĕсем Н. Ивановăпа И. Николаева куракансене илемлĕ юрăсем парнелерĕç.

Жюри членĕсем çапла пĕтĕмлетӳ турĕç: «Хăюллă хуняма» – Е. Никитина, «Ӳрĕк хуняма» – Р. Горшкова, «Çирĕп хуняма» – З. Галкина, «Вашават хуняма» – А. Иванова, «Супер хуняма» ята вара Чамăш ялĕнче пурăнакан Р. Ремнева тивĕçрĕ. Ăмăртăва хутшăннă хунямасене, паллах, асăнмалăх парнесем парса чысларĕç.

**Л. РОДИОНОВА.**

Чамăш ялĕ.

# Маттур дояркăсем

**Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем патĕнче**



Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ – кирек хăш хуçалăха та тăтăш укçа-тенкĕ парса тăракан çăл куç. Çакна «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт комплексĕнче ĕçлекенсем те ăнланаççĕ. Çулталăк ытларах каялла кунта çĕнĕ сĕт пăрăхĕ ĕçлеттерме пуçлани хуçалăха иртнĕ çул сĕтĕн тĕп пайне чи пысăк сортпа реализацилеме май панă. «Хуçалăх ертӳçисем çĕнĕлĕхсемпе тан пыни пире те ĕç укçи ытларах ĕçлесе илме çул уçрĕ. Кăçалтан ăна татах ӳстерме шутлани пире чуна парса ĕçлеме хавхалантарать», – терĕç ирхи сăвăма вĕçленĕ Ираида Ивановăпа Эльвира Васильева **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** ĕне сăвакансем.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче чуна парса ĕçлекенсен мал туртăмлăхĕпе пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн экономика аталанăвĕ пĕр çул çинчине те вĕсем каламасăрах ăнланаççĕ. Мĕншĕн тесен кун йĕркинче, темĕнле проект-программа пулсан та, конкретлă ĕçлекенĕн ăсталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пур, пулĕ те.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Шурчасем – пĕрремĕшсем



***Ял çыннисен тата пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕхе пăхса тăрассипе районта çулленех ветучреждениеcем хушшинче ĕç ăмăртăвĕ йĕркелеççĕ. 2012 çула пĕтĕмлетсен çак ăмăртура пĕлтĕр Шурчари ветеринари участокĕ мала тухнине палăртрĕç. Выльăх тухтăрĕсен çулталăкри ĕç-хĕлне пĕтĕмлетсе ирттернĕ пухура ветучасток ертӳçине Т. Львовăна выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕ Н. Яковлев диплом парса чысларĕ.***

***– Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ умĕнхи ку чыслав пире кăçал татах тăрăшуллăрах пулма хистет. Çапла тума тăрăшăпăр та, – терĕ Татьяна Ильинична диплом илнĕ хыççăн.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Ăнăçăва алăран вĕçертмерĕç

**Йышăну**

Юлашки çулсенче çĕр-шыв ертӳçисем те ял хуçалăх аталанăвĕ çине ытларах тимлĕх уйăрма пуçларĕç. Çĕнĕлĕхсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине тăрăшуллăрах пăхма хистеççĕ. Çакна шута хурса обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче чуна парса ĕçлекенсен мал туртăмлăхне тав туса район администрацийĕ çулленех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче экономика ăмăртăвĕ иртерет. Иртнĕ çул та ку тĕлĕшпе унччченхи çулхисенчен юлмарĕ.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче «Районта 2012 çулта выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсем хушшинче иртернĕ экономика ăмăртăвĕн кăтартăвĕсем çинчен» йышăнăва алă пусса çирĕплетрĕ.** Çулталăк хушши выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче палăртнă ӳсĕмсемшĕн тăрăшса вăй хунă кашни ĕçченшĕн питех те кĕтнĕ самант ку. Çак кĕрешӳре кашниех çĕнтерме тăрăшрĕ пулсан та, пысăк чыса чи хастаррисем кăна тивĕçрĕç. Кун пирки йышăнура çапла каланă:

1. 2012 çул кăтартăвĕсемпе экономика ăмăртăвĕнче çаксем çĕнтернĕ тесе шутлас тата вĕсене парнесем парас:

– Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çӳрекен "Чи лайăх сĕт ферми – 2012" вымпелпа 5 пин тенкĕ укçан парнене** Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Анаткассинчи сĕт фермине парас (ферма заведующийĕ Валентина Валерьяновна Макарова). Ферма коллективĕ çулталăк хушшинче пĕр ĕне пуçне вăтамран 6046 килограмм сĕт суса производствăна 1212,0 тоннăна (унччченхи çулхинчен 3,4 процент ытларах) çитернĕ;

– Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çӳрекен "Мăйракаллă шултра выльăхсен чи лайăх ферми – 2012" вымпелпа 5 пин тенкĕ укçан парнене** ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен "Свобода" ял хуçалăх производство кооператив-заводăн Йӳтĕркассинчи мăйракаллă шултра выльăх фермине парас (комплекслă бригада заведующийĕ Григорий Геннадьевич Белов). Йӳтĕркассисем çулталăк хушшинче самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсене талăксерен вăтамран 1093 грамм ӳт хуштарса пурĕ 40,5 тонна аш-какай туса илнĕ;

– Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çӳрекен "Чи лайăх сысна ферми – 2012" вымпелпа 5 пин тенкĕ укçан парнене** ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен "Свобода" ял хуçалăх производство кооператив-заводăн Кашмашри сысна фермине парас (ферма заведующийĕ Эльвира Фадеевна Замятина). Кашмашсем çулталăк хушшинче фермипе пурĕ 3977 çура, кашни 100 тĕп сысна ами пуçне 1895 çура илнĕ, сыснасене талăксерен вăтамран 501 грамм ӳт хуштарнă, аш туса илессипе пĕтĕмĕшле кăтартăва унччченхи çулхинчен 3,3 процент ӳстерсе 160,9 тоннăна çитернĕ.

– Пĕр ĕне пуçне 5 пинрен пуçласа 6 пин килограмм таран сĕт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн **дипломĕсемпе тата 1300-шер тенкĕ укçан парнесем парас**:

| | |
|---|---|
| **Чкалов яч. хис.** | |
| Тимофеева Надежда Алексеевна | 5034 кг |
| **Ильич яч. хис.** | |
| Иванова Юлия Афанасьевна | 5072 кг |
| Семенова Зинаида Михайловна | 5054 кг |
| **«Свобода»** | |
| Кириллова Елена Алексеевна | 5096 кг |
| Обжелянская Тамара Николаевна | 5088 кг |
| **«Путь Ильича» АФ** | |
| Николаева Ирина Петровна | 5045 кг |
| **Суворов яч. хис.** | |
| Орлова Надежда Николаевна | 5863 кг |
| Гордеева Вера Ильинична | 5476 кг |
| Олгашова Людмила Викентиевна | 5023 кг |

– Пĕр ĕне пуçне 6 пинрен пуçласа 7 пин килограмм таран сĕт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн **дипломĕсемпе тата 1600-шер тенкĕ укçан парнесем парас:**

| | |
|---|---|
| **«Путь Ильича» АФ** | |
| Иванова Светлана Александровна | 6024 кг |
| **Суворов яч. хис.** | |
| Журавлева Надежда Евгеньевна | 6489 кг |
| Филиппова Татьяна Николаевна | 6389 кг |
| Михайлова Надежда Валентиновна | 6082 кг |
| Антонова Фаина Юрьевна | 6004 кг |

– Пĕр ĕне пуçне 7 пин килограмран иртерсе сĕт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн **дипломĕсемпе тата 2000-шер тенкĕ укçан парнесем парас**:

| | |
|---|---|
| **Суворов яч. хис.** | |
| Печкова Валентина Николаевна | 7192 кг |

2. Ферма территорийĕсене тирпей-илем кĕртессипе иртернĕ конкурсра çаксем çĕнтернĕ тесе шутлас тата вĕсене дипломпа укçан преми парса чыслас:

– пĕрремĕш степеньлĕ диплом тата 5000 тенкĕ укçан преми ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооператив-заводăн Кашмашри сысна фермин коллективне (заведующийĕ Эльвира Фадеевна Замятина);

– иккĕмĕш степеньлĕ диплом тата 3000 тенкĕ укçан преми «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт фермин коллективне (заведующийĕ Раиса Ананьевна Блинова);

– виççĕмĕш степеньлĕ диплом тата 2000 тенкĕ укçан преми Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Анаткассинчи сĕт фермин коллективне (заведующийĕ Валентина Валерьяновна Макарова).

Ферма территорийĕсене тирпей-илем кĕртессипе çаксене лайăх енчен палăртас:

– «Свобода» хуçалăхăн Çатракассинчи сĕт ферми (заведующийĕ Елена Александровна Демьянова);

– Ильич ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн Уйкас Янасалти сĕт ферми (заведующийĕ Валентина Леонидовна Аврамова);

– «Герой» хуçалăхăн Шурчари сысна ферми (заведующийĕ Антонина Филимоновна Леонтьева).

3. Ял хуçалăх производствинчи пысăк производство ӳсĕмĕсемшĕн çĕнтерӳçĕ ятне парса ятарлă хăюпа, Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕпе тата 1000-шер тенкĕ укçан парнепе çаксене наградăлас:

3.1 Валентина Николаевна ПЕЧКОВĂНА – Суворов яч. хис. хуçалăхăн ĕнесене машинăпа сăвакан операторне – «2012 çулта ĕнесене машинăпа сăвас ĕçри чи лайăх оператор» ят парас. Вăл хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен пĕлтĕр 7192 кг сĕт суса пĕтĕмпе 207,3 тонна сĕт сунă, 100 ĕне пуçне 100 пăру илнĕ, вĕсене 100 процент упраса хăварнă;

3.2 Калерия Петровна ДИМИТРИЕВĂНА – «Путь Ильича» агрофирмăри ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекен оператора çулталăкра 100 ĕне пуçне 90 пăру илнĕшĕн – «2012 çулхи чи лайăх техник-осеменатор» ят парас;

3.3 Эльвира Фадеевна ЗАМЯТИНĂНА – ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооператив-заводăн тĕп зоотехникне – «2012 çулхи чи лайăх зоотехник» ят парас. Çак ята ăна выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче çĕнĕ технологисемпе малта пыракан опыта пурнăça кĕртнишĕн, аш-какай туса илессине 10 процент, сĕт сăвассине 10,6 процент ӳстернĕшĕн, ăратлă çамрăк выльăх реализацилес плана 100 процент шайĕнче тытса хăварнăшăн памалла тунă;

3.4 Елена Юлиановна ЕШМОЛАЕВĂНА – «Оринино» хуçалăхăн тĕп ветврачне – «2012 çулхи районти чи лайăх ветеринари ĕçченĕ» ят парас. Çирĕплетнĕ хуçалăхри ветсанитари ĕçĕсене вăхăтра тата пахалăхлă туса пынăшăн, сĕтĕн 92 процентне чи пысăк пахалăхпа туса илсе реализациленĕшĕн;

3.5 Раиса Ананьевна БЛИНОВĂНА – "Оринино" хуçалăхри Патаккассинчи сĕт фермин заведующине – "2012 çулхи чи лайăх ферма заведующийĕ" ят парас. Вăл выльăхсене апатлантарас тата пăхас çĕрте малта пыракан технологисемпе анлă усă курса пĕтĕмĕшле сĕт сăвассине 6,7 процент ӳстернĕ. Фермипе пĕр ĕне пуçне 4502 килограмм сĕт суса пĕтĕмĕшле кăтартăва 922,9 тоннăна çитернĕ. 92 процент сĕте чи пысăк пахалăхпа реализациленĕ. Кунта самăртма тăратнă выльăхсем талăксерен вăтамран 619 грамм ӳт хушса çулталăкра 15,5 тонна аш туса панă;

3.6 Андрей Альбертович АЛЕКСАНДРОВА – Суворов яч. хис. хуçалăхри сысна самăртакан оператора – «2012 çулхи сысна самăртассипе чи лайăх оператор» ят парас. Вăл пăхакан сыснасем талăксерен вăтамран 632 грамм ӳт хушса хуçалăха 52,5 тонна аш-какай туса панă;

3.7 Владислав Арефьевич ДЕДОВА – ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен "Свобода" ял хуçалăх производство кооператив-заводăн мăйракаллă шултра выльăх самăртакан операторне – «2012 çулхи мăйракаллă шултра выльăх самăртакан чи лайăх оператор» ят парас. Вăл пăхакан выльăхсем талăксерен вăтамран 1093 грамм ӳт хушнă, хуçалăха 40,5 тонна аш туса панă;

3.8 Наталья Вячеславовна РЫЖКОВĂНА – «Герой» хуçалăхри пăру пăхакана – «2012 çулхи чи лайăх пăру пăхакан» ят парас. Вăл пăхакан пăрусем çулталăк хушшинче талăксерен 793 грамм ӳт хушса хуçалăха 11,9 тонна аш туса панă. Пăрусене 100 проценчĕпех сыхласа хăварнă;

3.9 Оксана Анатольевна ПЕТРОВĂНА – ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен "Свобода" ял хуçалăх производство кооператив-заводăн сысна пăхаканне – "2012 çулхи сысна çурисем илессин чи лайăх операторĕ" ят парас. Вăл çулталăк хушшинче кашни тĕп сысна аминчен 18,9 çура илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва 539 çурана çитерме пултарнă;

3.10. Валентина Васильевна БЫЧКОВĂНА – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществин чăх-чĕп пăхаканне – «2012 çулхи чи лайăх чăх-чĕп операторĕ» ят парас. 15,1 пин чăх пăхакан ĕçчен кашни чăхран 319 штук çăмарта илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва 4,81 миллион штука çитернĕ.

3.11 Василий Ильич ЯКОВЛЕВА – Мичурин яч. хис. агрофирмăн утарçине хурт-хăмăрăн пĕр çемйи пуçне 12 кг пыл туса илсе пĕтĕмĕшле калăпăша 960 килограма çитернĕшĕн "2012 çулхи чи лайăх утарçă" ят парас.

Лашасен йышĕ сахалланнипе тата тиха илесси пĕчĕкленнипе «2012 çулхи лаша пăхакан чи лайăх ĕçчен» ят никама та парас мар.

Ĕçре ырă ята тивĕçнисем

# Ачисен телейĕ



Календарьпе çуркунне çитнине пăхмасăрах хĕл сивви тăруках катана каймарĕ. Акă халĕ те çурхи хĕвел питтинче явăнса вĕçекен пĕчĕкçĕ юр пĕрчисем таврана юмах илемне парнелеççĕ. Чӳречерен çак илемпе хавхаланса мăнукĕсене яшка лартса панă май асламăшĕ вĕсене валли чей хатĕрлеме тăчĕ. Çакăнти юнашар çӳлĕк çинчи ывăлĕпе икĕ хĕрĕн сăн ӳкерчĕкĕ 60 çул урлă каçнă ĕç ветеранне самантрах çамрăклăха тавăрчĕ. Чей чашăкĕсене вĕри шыв яракан асаннен пурнăçĕ кĕске самантра куç умне тухрĕ...

Вунă ачаллă хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ Светлана çемьере иккĕмĕш пулнăран унăн ачалăхĕ çаран çинчи вăйăсенче иртмен. Мĕн пĕчĕкрен ашшĕ-амăшне пулăшма, йăмăкĕсемпе шăллĕсемшĕн тăрăшма тивнĕ унăн. Çавăнпах-тăр Çĕрпӳ районĕнчи Хурамал Туçа ялĕнче 1951 çулхи утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче çуралнă хĕрĕн аслă пĕлӳ илсе пысăк пуçлăхра ĕçлесси те ĕмĕтре пулман. Çапах пĕлӳ çулĕнчен те тĕппипех пăрăнман. Вăтам шкул хыççăн вăл Сĕнтĕрвăрринчи профтехучилищĕре штукатура, каярахпа çак хуларах мастер-технолога вĕренет. Строитель профессине алла илнĕ хĕрĕн çак çул çинче пĕтĕм ĕмĕрĕ иртет.

Вăл вăхăтра газ ĕçĕпе тимленĕ Александр Воробьевпа паллашса çемье çавăрсан Çĕрпӳ хĕрне пурнăç çулĕ Муркаша çитерет. Ĕçрен нихăçан та пăрăнман С. Воробьева Муркашри кирпĕч заводне ĕçе вырнаçать те тивĕçлĕ канăва тухиччен çакăнта ĕçлет. Çак хушăра пĕлĕве хăпартса ахаль рабочирен цех мастерне, склад заведующине, продукци пахалăхĕ енĕпе ĕçлекен инженера çитет.

Ĕçрен нихăçан та пăрăнман Светлана Николаевна заводра вăй хунипе пĕрлех 3 ача çуратса ӳстерет, вĕсене тивĕçлĕ воспитани парса хăйсене килĕшнĕ ĕçе алла илме пулăшать. Çакăншăн ăна паян икĕ хĕрĕпе ывăлĕ тав сăмахĕ калаççĕ.

– Ĕçре «Хисеплĕ строитель» ята тивĕçнĕ аннене ырăпа тав тумалли пирĕн пайтах. Вăл тăрăшнипе эпир хамăр пурнăçра йăва çавăртăмăр. Вăл мăнуксене те тивĕçлĕ воспитани парас ĕçрен пăрăнманни пире савăнтарать. Анне сад-пахчара ĕçлеме юратни, хĕл валли çулленех тĕрлĕрен варенни, сĕткен-компот янталани – пирĕншĕн пурнăçри ырă тĕслĕх, – терĕ амăшĕ пирки сăмах пуçарсан ЧР Патшалăх ветеринари службин ветнадзор уйрăмĕн Муркаш районĕнчи аслă инспекторĕ Олег Воробьев.

Виçĕ ачаран аслисем – хĕрсем. Вĕсем те паян пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă. Асли Алена Муркашри ЖКХ-ра бухгалтер-кассирта ĕçлет. Люба та шăллĕ пекех ветеринар ĕçне алла илнĕ. Унăн та хăйĕн çемйи.

Хăйне 6 мăнук парнеленĕ ывăл-хĕрĕсенче Светлана Николаевна хăйĕн телейне курать. Пытармасть вăл çакна. Анчах ачисемпе мăнукĕсем ăна хăйсен телейĕ тесе йышăнаççĕ. Амăшпĕлтерĕшĕ паллăраххине шутласа эпĕ пурнăçра тарăн йĕр хăварнă ĕç ветеранне ачисен телейĕ тесе йышăнтăм. Хама çуратса ӳстернĕ аннене те хамăн телей тесе шутлатăп та...

**А. БЕЛОВ.**

# Хисепе те, тав сăмахне те тивĕç

***Венера Чаплина – Муркашри районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕнче вăй хуракансенчен пĕри. 28 çул вăл пĕр улшăнмасăр çакăнта медицина сестринче тăрăшать. Венера Михайловна ĕçтешсен хисепне те, чирлисен тав сăмахне те тивĕç. Вăл питĕ хастар специалист, хăйĕн тивĕçĕсене яланах пахалăхлă та вăхăтра пурнăçланипе палăрса тăрать, чирлисен пурнăçĕшĕн ырми-канми тăрăшать.***

***Венера Михайловна мăшăрĕпе пĕрле икĕ ача пăхса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă: пĕри – академи, тепри колледж пĕтернĕ. Шел пулин те, икĕ çул каялла унăн мăшăрĕ çĕре кĕнĕ. Паян вара ачасем, мăнукĕ тата килĕштернĕ ĕç кил ăшшине упраканшăн пурнăçри пысăк тĕкĕ пулса тăраççĕ. «Çулсем кайнăçемĕн хĕрарăмшăн пурнăçра ачасем тĕрек пулса тăни питĕ пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп», – çапларах палăртать хăйĕн шухăшне Венера Михайловна. Хĕрарăмăн тивĕçĕ ачасем çуратса ӳстерессинче, вĕсене юратассинче, каярах вара вĕсене шаннинче тесе шутлать шурă халатлă ăста специалист.***

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Районăн маттур хĕрарăмĕсем



# Хĕрарăмсем яланах хастарлăхпа палăраççĕ

Раççейри хĕрарăмсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне пĕрремĕш хут 100 çул каялла уявланă темелле. Ун чухне Петербургри хĕрарăмсем хула пуçлăхĕ патне хĕрарăмсене пырса тивекен ыйтусемпе наука вулавĕсен ирне («Научное утро по женскому вопросу») ирттерме ыйтнă. Пĕрремĕш «ир» мартăн 2-мĕшĕнче пулнă. Пурăнма хаклă пулни, амăшсен ыйтăвĕсем тата сасăлассин прави – пĕрле пухăнса çакна сӳтсе явнă. 1914 çулта хĕрарăмсем вăрçа хирĕç пулнине палăртса демонстрацие пухăннă. 1917 çулта Раççей хĕрарăмĕсем «Çăкăр тата мир!» лозунгпа урамсене тухнă. Шăпах çав кун, кивĕ стильпе февралĕн 23-мĕшĕ, çĕннипе мартăн 8-мĕшĕ – Раççей историне Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ пулнипе кĕрсе юлнă та.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче 1965 çултанпа мартăн 8-мĕшĕ кану кунĕ шутланма тытăннă. СССР саланнă хыççăн та çак уява Раççей уяв календарĕнчен кăларман, Союзра пулнă хăш-пĕр республикăсенче те ăна уявлама пăрахман.

Раççейри хĕрарăмсен союзĕ яланах хăйĕн пуçарулăхĕпе палăрса тăнă, уйрăмах иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче. Акă Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнчи 19 статьяна та Хĕрарăмсен союзĕ хутшăннипе çирĕплетнĕ. Унта арçынсемпе хĕрарăмсен тан прависем çинчен каланă.

Паян вара ку пурнăç нормипе танлашрĕ тесен те йăнăш мар. Хĕрарăмсем тĕрлĕ ĕçре лайăх енчен палăраççĕ. Çемье ăшшине упракансем тĕрлĕ сферăра ĕçлесе ертӳçĕ ĕçне те чыслăн пурнăçлаççĕ, патшалăх аталанăвне палăртакан çул-йĕре çирĕплетессине те хутшăнаççĕ.

Хĕрарăмсен хастарлăхне хĕрарăмсен пирĕн республикăри канашĕн, çавăн пекех районти канашĕн анлă ĕçĕ-хĕлĕ те çирĕплетсе парать. Хĕрарăмсен районти канашĕ халăха çемье, ашшĕ-амăшĕн пĕлтерĕшне кăтартса ăнлантарать кăна мар, çемьесене çирĕплетме пулăшакан мероприятисем те чылай йĕркелет. «Çемьесенче ачасем тĕрĕс-тĕкел, сывă пурнăç йĕркине хăнăхса ӳсчĕр, аслă ăрава хисепleме хăнăхчăр тесе тăрăшатпăр. Эпир кăçал валли палăртса хунă ĕç те питĕ анлă, кунпа пĕрлех çăмăл та мар. Анчах та мĕн палăртнине пĕтĕмпех пурнăçлама районти хĕрарăмсен хастарлăх та, пултарулăх та çителĕклĕ тесе шутлатпăр. Уяв ячĕпе районти пур хĕрарăма та ăшшăн саламласа телей, çирĕп сывлăх, юрату, çемьесенче килĕшӳ сунатăп», – çапла кĕскен пĕлтерчĕ хĕрарăмсен районти канашĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма ыйтнă май канаш ертӳçи Л. Тарасова.

Мартăн 5-мĕшĕнче Лилия Юрьевна Канаш хулине çитсе килчĕ. Республика шайĕнчи уяв мероприятийĕнче хĕрарăмсен районсемпе хуласенчи канашĕсен ĕçне тĕрлĕ номинацисенче хак парса пĕтĕмлетрĕç. Хĕрарăмсен пирĕн районти канашĕ «Нравственноç тата çемье хаклăлăхĕсене çирĕплетнĕшĕн тата упранăшăн» номинацире палăрма пултарчĕ. Лилия Юрьевнăна вара хĕрарăмсене социаллă пулăшу панăшăн тата общество ĕçре активлă пулнăшăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотипе чысларĕç.

Малашне те пирĕн районти хĕрарăмсем маттур пуласса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Следстви комитетĕнчен

## Инке наркăмăш сутнă

Январĕн 22-мĕшĕнче вăхăт каç еннелле сулăнсан Сентимĕр ялĕнчи тăхлачă суту ĕçне пикеннĕ, çын сывлăхне сиен кӳрсех пысăк укçа-тенкĕллĕ пулас тенĕ ĕнтĕ. 1965 çулта çуралнă хĕрарăм 0,5 литр кĕрекен спирт пур шĕвеке 130 тенкĕпе сутнă. Кайăк-кĕшĕк пĕчĕккĕн сăхсах тăранать теççĕ те.

«Хамăр ял» этикеткăллă продукци пахалăхсăр, сывлăхшăн сиенлĕ пулнине сутуçă аванах чухланă-ха. Апла пулин те тăхлачă ацетон тата ытти наркăмăш пур шĕвеке туяма сĕннĕ.

Халĕ вара следовательсем хĕрарăм РФ УК 238 статьян 1 пайĕнчи йĕркене пăсса преступлени тунине çирĕплетнĕ. Асăннă ĕçе район прокуратурине тăратнă.

## Полици ĕçченне çапнă

Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн Мăн Сĕнтĕрти пунктĕнче полици сотрудникĕ хăйĕн кулленхи тивĕçне пурнăçланă. Вăл хĕрĕх çултан иртнĕ саккуна пăснă çын тĕлĕшпе административлă протокол çырнă. Хайхискерне çакă килĕшмен. Çапла вара вăл нумаях та шухăшласа тăман, полици сотрудникне хирĕçлесе питĕнчен пуçпа çапнă.

Кунта преступлени тунин сĕмĕ пуррине шута илсе полици сотрудникне сиен кӳнĕ çын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма йышăннă.

**И. ФЕДОТОВ,**
**аслă следователь.**

# Çурхи каç

**Музыки Виталий РОМАНОВĂН**
**Сăвви Игорь МАЙКОВĂН**



1. Пит асамлă кĕçĕр çурхи каçĕ,
Чун юрлать савни ытамĕнче.
Çăлтăрсем пире телей сунаççĕ
Хĕм сапса хавас вăй картинчен.

*Хушса юрламалли:*
**Савăнса тапать чĕреçĕм**
**Савăк юрă шăратса.**
**Ман санпа утасчĕ вĕçĕм**
**Пурнăç тăрăх юратса.**

2. Ах епле, савниçĕм, эс илемлĕ.
Чуп тусассăн пуçăм çавранать.
Эп паян нихçанхинчен телейлĕ,
Ялкăшса çунать чунра кăвайт.

3. Куçусем хĕлхем сапса, ачашшăн
Ытарми пăхаççĕ ман çине.
Пулăп эпĕ, тусăм, ĕмĕр санăн,
Хакли çук санран çак тĕнчере.

Пулăçсен ăмăртăвĕ

# Кану кунĕнче – пăр çинче



Хĕл кунĕсенче Чуманкасси ялĕнчи Казанка плотини çинче пулăçсен ăмăртăвне ирттересси ырă йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Иртнĕ кану кунĕнче те кунта пулăçсем хăйсен çулленхи ăмăртăвне йышлă пуçтарăнчĕç. Çавăн пекех курма пухăннисем те сахал мар пулчĕç.

Ăмăртăва тĕп судья В. Иванов йĕркелесе ертсе пычĕ. Каласа хăвармалла, асăннă ăмăртăва йĕркелессипе вăл çуллен чылай тимлет.

Алăра вăлта пулсан сехет йĕппи куçни те сисĕнмест. Çапла пулă тытма уйăрнă вăхăт та иртрĕ. Унтан пулăçсем пăра пăраласа шăтарассипе хăшĕ çивĕчрех пулнипе вăй висрĕç.

Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Белов пулăçсен ăмăртăвне хутшăннисене пурне те тав сăмахĕ каларĕ, çĕнтерӳçĕсене парнесем парса чысларĕ. Чи нумай пулă тытаканни кăçалхи ăмăртура И. Васильев пулчĕ. Унăн пулă тултарнă хутаççи пĕр килограмм ытла тайрĕ. Пăр шăтаракансем хушшинче В. Семенов палăрчĕ. Чи пысăк тата чи пĕчĕк пулă тытакансем, чи çамрăк пулăç тата чи инçетрен килнĕ пулăç та парнесемсĕр юлмарĕç. Пулăçсен чăн-чăн уявĕ пулчĕ çав кун.

**А. НИКОЛАЕВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: акă вăл – пĕрремĕш пулă!**

# Ачасене шкула хатĕрлеççĕ

***Кирек епле ĕçре те пуçламăшĕ пур. Ача-пăча шкулта тивĕçлĕ пĕлӳ пухасси те ăна çак ĕçе епле хатĕрленинчен пуçланать. Кунта вара шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕ тĕп вырăнта. Ильинкăри шкулчченхи кĕске вăхăтпа ĕçлекен «Колосок» ушкăн вăтам шкулпа пĕр çуртра вырнаçнă. Кĕçĕннисем кунта аслисен вĕренӳ ĕçне-хĕлне ал тупанĕ çинчи пек курса тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсене шкул çулне хатĕрлессин яваплăхĕ те пысăк. Çакна эсир сăн ӳкерчĕкре куракан воспитательсем лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): Ирина Ялтеева, Ирина Семенова.***

***– Ушкăн уçăлнăранпа 12 çул иртрĕ. Паян кунта 28 ача çӳрет. Шкулпа пĕр çуртра пулни пире хамăрăн ачасем малашне епле вĕреннине-аталаннине те асăрхаса тăма пулăшать. Кунпа пĕрлех çакă пире хамăрăн ĕçсене те шкул пурнăçĕпе çыхăнтарса пыма пулăшать. Çакна асăрхакан ашшĕ-амăшĕ пирĕн ĕçне кăмăллă пулнине палăртать, – терĕ 18 çул педагогика ĕçĕнче вăй хуракан И. Яртеева.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Вĕсем ĕçĕпе хастар



# Хамăршăн, хĕрарăмсемшĕн!

Шӳт

– Акă çитрĕм те эпĕ. Чип-чипер, шип-шивой! Тытса пăхма та пултаратăн. Ху мĕнле пурăнтăн, ман чиперккеçĕм? Кил-ха кунтарах. Ай, эс мĕн... Ухмаха тухрăн-им?! Ма йĕтĕрпе хăмсаратăн? Эпĕ-и? Эп ӳсĕр-и? Хăварăн уяв кунĕнче хĕнеме те юрать тетĕн-им?

Мĕн «пăх» тетĕн? Мĕн пăхмалли пур вăл сехете? Тахçанах курнă эп ăна. Çулталăк ытла ĕнтĕ ялан пĕр вăхăт кăтартать.

«Юсарăм», – тетĕн-и? Хăвах-и? Ай, маттурăм. Сана куншăн виççĕмĕш степеньлĕ чи пылак чуппа! Ӳлĕмрен, хăвна лайăх тытсан, чуппасене татах та тивĕçĕн, вĕсен тулли кавалеркки те пулăн. Ун чухне вара саншăн çĕмăллăхсем пулĕç. Çӳпçап витрине эрнере пĕрре хамах тухса пушатăп, диванне те хамах пуçтарăп.

Мĕн?! Ман пек выльăхпа чуп тумастăп тетĕн-и? Тен, эсĕ тĕрĕс те калатăн. Паян, кĕленче пушансан, саккускă чĕркенĕ хаçата пăхкаларăм та... Ак, тамаша! Ĕненсех лартрăм. Эпир çак тĕнчере пĕрремĕш хут пурăнмастпăр-мĕн. Кашни хутĕнчех чĕр чунсем пулса килетпĕр. Çавăнпа та тупăшмастăп. Иртнĕ пурнăçра тен эпĕ чăнах та пĕр-пĕр выльăх пулнă.

Мĕншĕн тӳрех «качака таки»? Ман тытти лаша е ашак. Ма макăратăн эсĕ? Сан мар, ман йĕмелле. Эпĕ лаша пулнă-иç! Выльăхпа пурăнса çур ĕмĕре сая ятăм тетĕн-и? Эп сана ăнланмастăп-и? Питĕ лайăх ăнланатăп. Тата малараххи пурнăçра, ашак пуличчен, эпĕ хĕрарăм пулнă! Вăт! Мĕн куçна чарса пăрахрăн?! Ну, лекнĕ те вара мана ун чухне упăшка! Вылькӑхпа танлаштарни ăна ачашласа калани кăна... Чи усал чĕр чунпа тискертерехчĕ. Кунсерен хупахсенче çапкаланса çӳретчĕ, ӳсĕр пуçĕпе ют хĕрарăмсем патĕнчех тӳнсе каятчĕ. Миçе хутчен тытса хĕнемен пулĕ ăна упăшкисем... Пĕлетĕн-и, мĕн чухлĕ хăтарнă эпĕ ăна патакран?! Эсĕ мана икĕ хутчен урăлтаркăчран хăтартăн та кăркка ами пек хăпартланатăн. Чи нумай асапланаканни имĕш эсĕ.

Мана килте пĕрре те пулăшман вăл. Хуçалăха пĕчченех тытса пыраттăм. Пĕлетĕн-и ĕлĕк хуçалăха тытса пыма мĕнлерех йывăр пулнине? Çуртсенче хальхи пек çӳп-çап пуçтармалли машинăсем те, шывĕ те, газĕ те çукчĕ. «Тайд» е «Ариэль» ятне те илтмен. Пуçа шампунь лексе курман. Çавах «хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм та ăсĕ кĕске» тетчĕç. Хальхи хĕрарăмсем пек кĕске çӳçпе çӳреме те ăс çитмен-çке, тупата...

Пасарсене те çуран çӳреттĕмĕр вĕт. Мĕншĕн тесен, леш, троллейбус текеннисене чуптарма ток шыраса тупаканĕ, Менделеевчĕ-и-ха вăл, хăй те, унăн аслашшĕпе асламăшĕ те çуралман ун чух. Магазинсенче те хальхи пек «Лайăх», «Чапаев», «Братья Таланцевы» вырăнне темле шăршлă шĕвек сутатчĕç.

Кĕпе çăвасси тата... Эсĕ ав кĕпе-йĕм пĕр уйăх алă вĕççĕн çăватăн та мăкăртататăн. Çумалли машинăна юсама шухăшламастăн та. Ав сехете чипчиперех юсанă-çке? Шаккать, шельмă. Хăтланса пăх-ха машинăна юсама. Атту эпир ун пеккине упăшкасенчен кĕтсе иличчен хĕрарăм ĕмĕрĕ те иртсе каять. Пире тарăхтарма çеç пĕлеççĕ вĕсем.

Эс калатăн: «Сана ăнланмастăп», – тетĕн. Эпир, хĕрарăмсем, пĕрпĕрне ăнланмасан тĕнче те тытăнса тăраймĕ. Атяха тĕпел куркинелле. Калаçса ларăпăр. Чим-ха, ăçта каятăн вара эс? Эрех кĕленчи патне-и? Хăвăн «вылькăхунтан» пытарса хуни пур тетĕн-и? Маттур! Тĕрĕс тунă! Паян хамăршăн, хĕрарăмсемшĕн, пĕрер çĕршер грамм «Ирхи сывлăм» е «Кĕмĕл çăл куç» çыннисене çап сылăх та пулĕ. Сыппа пытăр апла пулсан!

**Лĕп Шу Микули.**

Православи кĕтесĕ

# Мартăн 9-мĕшĕ – вилнисене асăнмалли кун

Этем вилсен унăн вилĕмсĕр чунĕ ку тĕнчерен леш тĕнчене куçса каять. Унта вăл ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнать. Кам ку тĕнчере усал туса пурăннă, Турăран ытла шуйттана пăхăнса пурăннă пулсан, çылăхлă пулсан, леш тĕнчере усал курса, асапланса пурăнать.

Сахал çын вилес умĕн йĕре-йĕре ӳкĕнсе хăйсен çылăхĕсене чунтан-вартан каласа каçарттарать, ытларах чухне çынсем ӳкĕнмесĕр вилеççĕ. Пĕр вилсен çылăхсене Турă умĕнче ӳкĕнсе каçарттарма çук. Çавăнпа çылăхпа вилнисене пулăшма вĕсен чунĕсемшĕн ку тĕнчере Турра кĕлтăваççĕ. Вĕсемшĕн кунта кĕл туни леш тĕнчере вĕсене питĕ пулăшать, асапĕсенчен хăтарать.

Вилнисене асăнса килти кĕлĕре те, чиркӳре тăвакан кĕлĕсенче те (лития, панихида) кĕлтăвас пулать. Пуринчен ытла Литурги кĕлли вăхăтĕнче вĕсене асăнса пай кăларни пит хăватлă. Çулталăк хушшинче вилнисене юри асăнакан кунсем пур (родительская суббота), çав кунсенче вĕсене асăнтарас пулать. Çитес шăмат кун, çăварни эрни умĕнхи, çак ятарлă кун шутланать. Çак куна вилнĕ тăванăрсене асăнса ирттерĕр. Малтанах ирех чиркĕве кайса вĕсен ячĕсене хут çырса парса Литурги кĕллинче просфор кăстарас пулать. Чиркĕве апатçимĕç илсе пырса Литурги хыççăнхи панихида кĕллинче вĕсене кĕлтуса тасаттарас пулать. Çак апат-çимĕçĕн пĕр пайне киле асăнма илсе каяççĕ, юлашкине чиркĕве асăнма парса хăвараççĕ.

Тăванăмăрсем, çак кун вилнĕ хамăр çывăх çынсене асăнар, вĕсем пирĕн кĕлле питĕ кĕтеççĕ, пирĕнтен пулăшу илессе шанаççĕ.

**Йӳçкассинчи чиркӳ настоятелĕ Сергий атте.**

Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

# Ултав серепине ан çакланăр

Юлашки вăхăтра район территорийĕнче Раççей Федерацийĕн патшалăх Пенси фончĕн сотрудникĕсем ячĕпе обязательнăй пенси страхованийĕн килĕшĕвĕсене тăвас текенсем тĕл пулма пуçларĕç. Çавна май Пенси фончĕн районти управленийĕ çакăн пирки пĕлтерет. Пирĕн сотрудниксем обязательнăй пенси страхованийĕн килĕшĕвĕсене тăвас тесе çуртсен картишĕсемпе подъездсем тăрăх çӳремеççĕ, паспорт даннăйĕсене ыйтса тĕпчемеççĕ, хваттерсене кĕре-кĕре тухмаççĕ. Çитменнине кану кунĕсенче çак ĕçсене пурнăçламаççĕ.

Управлени çавна та пĕлтерет. Килĕшӳсем тăвасси обязательнăй япала мар. Саккунпа килĕшӳллĕн ăна тăвасси е тăвас марри – кашнин хăйĕн ирĕкĕ. Палламан çынсене хăвăр пата ан кĕртĕр. Енчен те сире килĕшӳ çине алă пусма ыйтаççĕ пулсан, малтан унăн текстне тĕплĕн вуласа тухăр.

Асăрхаттаратпăр: палламан çынсем хăйсене Пенси фончĕн сотрудникĕсем теççĕ пулсан, удостоверени кăтартма ыйтăр. Пенси фончĕн сотрудникĕн удостоверенийĕ тĕксĕм хĕрлĕ тĕслĕ, хуплашки çине Раççей Федерацийĕн Гербне ӳкернĕ, аяларах «Пенсионный фонд Российской Федерации» тесе çырнă.

Енчен те çав-çавах килĕшӳ тума хистеççĕ тата паспорт даннăйĕсене ыйтаççĕ пулсан, РФ Шалти ĕçсен министерствин районти полици пайне (тел: 62-267) е Пенси фончĕн районти управленине (адресĕ: Муркаш ялĕ, Октябре 50 çул урам, 23 а çурт, тел.: 63-041; 62-191) пĕлтерĕр.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

# Ырă çынсем пурри савăнтарать

Хисепе тивĕçлисем

Эпĕ çамрăк çын мар ĕнтĕ, 80 урлă каçнă. Темĕн тĕрлĕ чир-чĕр те часах çыпăçать пирĕн çума. Пур чухне Муркаша район больницине каймалла çук. Çавăнпа та Кашмашра фельдшерпа акушер пункчĕ пурри питех те лайăх пирĕншĕн.

Кунта кăмăлĕпе пуян, ырă чун-чĕреллĕ çын Татьяна Скворцова ĕçлет. Унăн пулăшуçи – Галина Григорьева.

Çамрăк пулсан та Таня пурипе те пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Чирлисемпе анчах мар, килĕнче те мăшăрĕпе, хунямăшĕпе, ачисемпе килĕштерсе шăкăл-шăкăл пурăнаççĕ. Тухтăр укол таврашĕ çырса парсан кану е праçник кунĕ пулнине пăхмасăр килне те кайса çӳремен мар. Кану кунĕнче чăрмантарса ан çӳрĕр тенине нихăçан та илтмен.

Пĕррехинче каçхи 10 сехет хыççăн сулахай енчи урапа алă тĕнсе ларчĕç. Кайрантарах йĕппе тирнĕ пек нăйлама пуçларĕç. Ним тума та çук, Таня тухтăр патнех шăнкăравлама тиврĕ. Вăхăчĕ каçхине пулин те, вăл мана мĕн тумаллине, мĕнле эмелсемпе сипленнеллине тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Тепĕр темиçе сехетрен хама чиперех туйма пуçларăм.

Тепрехинче сулахай енчи пит çăмарти çине куçран кăшт аяларах шатра тухрĕ. Пысăкланса пырать. Муркаш больницине тухтăр патне 2 – 3 хутчен те кайрăм. Шикленме кирлĕ мар, хăрушши нимĕн те çук тесе ăпăлантарчĕç, нимĕнле эмел те çырса памарĕç.

Çапла çулталăк ытла пурăнтăм. Юнашар татах тепĕр шатра тухрĕ. Манăн кукамайăн та пичĕ çине шатра тухнăччĕ. Пысăклансах пычĕ. Ун чухне çынсем больницăна çӳремен вĕт. Кайран питĕ хытă ыратнипе асапланса вилчĕ. Çынсем унăн рак пулнă терĕç ун чухне.

Çавсене шухăшласа çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупман каçсем те нумай пулчĕç.Таня патне кайса калаçса пăхас-ха терĕм. Урăх никамра та шанчăк курмарăм. Календула маçĕпе сĕрсе пăхма сĕнчĕ вăл. 2 – 3 уйăх сĕрсе пурăннă хыççăн чиперех иртсе кайрĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ канлĕ пурăнатăп.

Икĕ çул каялла питĕ вăйлă пăрлă çумăр çурĕ. Эпĕ хуçалăх садне виктори çырли татма кайнăччĕ. Уй варринчех çӳхе çи-пуçпа пĕр хӳтлĕхсĕр лартăм. Ура çинче тăма та май çукчĕ.

Çумăр чарăнсан çырла витрисене уй варринчех пăрахса хăварса асфальт çул çине аран утса тăхрăм. Мана хĕрхенсе пĕр автомашина чарăнчĕ. Эпĕ хăш ялта пурăннине ыйтса пĕлчĕç, Кашмаша киле çитиех леçсе хăварчĕç. Эпĕ нимĕн те курми, илтми пулса лартăм. Автомашини мĕн тĕслине те, çыннисем мĕнлерехххине те астумастăп. Кабинăра арçынпа хĕрарăм пулнине тĕлĕкри пек кăна астăватăп. Чăннипех те Турă пачĕ пулĕ мана вĕсене.

Хама вилĕмрен çăлнă çынсене темшĕн-çке тӳрех хаçат урлă шырамарăм. Паян кунччен çавăншăн хама айăплă туятăп. Тен манăн çак сăмахсене вуланă хыççăн тупăнĕç вĕсем? Шăнкăравласа пĕлтерĕр. Манăн телефон: 68-3-76 (Вера Никитина).

Киле çитсен хам ним тума аптăранă енне тӳрех Таня патне шăнкăравларăм. Вăл 5 минутранах çитрĕ. Ывăлне çул çинче тĕл пулнă имĕш, автомашинăпа çитрĕ.

Манăн юн пусăмĕ питĕ пысăкчĕ. Вăл мана хăвăртрах пулăшу пачĕ. Хывăнса тăхăнма та пулăшрĕ. Эпĕ, паллах, хăлхасăр, куççăр, тăнсăр çын пек лартăм. Эмелсем, япаласем ăçта пулнине те каласа ăнлантарма пултараймарăм. Пĕтĕмпех хăех шыраса тупрĕ, чей те вĕретсе ĕçтерчĕ, утиялпа витсе вырттарса хăварчĕ. Кайран пĕлтĕм: ывăлĕпе кайса çырла витрисене те уйран илсе килнĕ иккен, çенĕке лартса хăварнă.

Таня, çакăнта çырнă сăмахсене эпĕ сана тахçанах калас тенĕччĕ. Ниепле те таппратса калаймарăм. Çавăнпа та хаçат урлă та пулин хам шăхăшсене пĕлтерес терĕм. Тавах сана ырă кăмăлушăн, пирĕн пеккисемшĕн чунна пама хатĕр пулнишĕн. Çирĕп сывлăхлă, вăрăм ĕмĕрлĕ, телейлĕ пул. Эпĕ анчах мар, вата çынсем пурте сана ырăпа асăнаççĕ. Вĕсен ячĕпе те сана питĕ пысăк тав!

**Вера НИКИТИНА.**

Кашмаш ялĕ.

Раççейре

# Чару пирки ан манăр

Мускав Правительстви пĕлтернĕ тăрăх 2013 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса хулара груз турттармалли автомашинăсем çӳремелли правилăсем улшăнчĕç. Мускав хулин Транспорт тата çул-йĕр транспорт инфраструктурине аталантарассин департаменчĕн представителĕсем Чăваш Республикинчен çĕр-шыв тĕп хулине çула тухакан груз турттармалли автотранспорт хуçисене çĕнĕлĕхсене шута илме сĕнеççĕ.

Мускав Правительствин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн 12 тонна е ытларах тиевлĕ груз турттармалли транзитлă автотранспортăн Мускав чиккинче тата хула тавралла çавра çулпа çĕрлехи вăхăтра 22 сехетрен тытăнса ирхи 6 сехетчен кăна çӳреме ирĕк пур. Ытти чухне çавра çулпа çӳреме юрамасть.

Майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çавăн йышăрăшлă груз турттармалли пур машинăсене те ирхи 6 сехетрен тытăнса 22 сехетчен çавра çул çине кĕме чараççĕ. Кунсăр пуçне май уйăхĕнчен пуçласа октябрь уйăхĕччен эрне кунсенче, шăмат кунсенче, вырсарни кунсенче, ĕçлемен тата кану кунĕсем умĕнхи кунсенче, ĕçлемен кунсенче чару вăхăчĕ 2 сехет чухлĕ ӳсет – 6 сехетрен тытăнса 24 сехетчен.

Çапла туни Мускав транспорт узелĕнче лару-тăрăва ансатлатассипе, тĕп хулапа облаçра транспорт хатĕрĕсем çӳрессине сахаллатассипе, регионти экологие лайăхлатассипе тата çул-йĕр хăрушсăрлăхне ӳстерессипе çыхăннă.

# Бокс ăмăртăвĕ малашне те Муркашрах иртет

Спорт

**Муркашра иртнĕ республика шайĕнчи бокс ăмăртăвĕ виçĕ куна пычĕ. 135-е яхăн боксер «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнчи ринг çинче вăй виçрĕ. Чулхуларан, Лысково, Кстово, Саранск, Йошкар-Ола, Санкт-Петербург хулисенчен пухăнчĕç боксерсем. Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Канаш, Çĕрпӳ хулисенчи, Красноармейски, Элĕк, Шупашкар тата, паллах, Муркаш районĕсен спортсменĕсем хаваспах ăмăртăва хутшăнчĕç.**

Района спорта аталантарассипе чылай ĕç пурнăçлани палăрать, спорт ăмăртăвĕсен календарĕнче те çĕннисем хушăнаççĕ. Акă иртнĕ эрнере Совет çарĕсене Афганистанран кăларнине асăнса, интернационалист-салтаксене халалласа Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн Муркашра республикăн уçă ăмăртăвĕ пĕрремĕш хут иртрĕ. Истори страницисене тишкерсен çав сăртлă-туллă çĕр-шыври вăрçă пирĕн районти 144 салтака, апла пулсан тата ытларах çемьене тӳррĕнех пырса тивнĕ. Шел пулин те, 7 салтак киле тавăрнайман. «Вĕсене эпир нихăçан та манас çук. Хăйсен çар тивĕçне чыслăн пурнăçланă интернационалист-салтаксене халалланă спорт ăмăртăвĕ те тивĕçлĕ спортсменсене малалла çул уçса парасса шанас килет. Пирĕн районтан тухнă боксерсем те тен тĕнчипех паллă пулĕç», – çакна палăртса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ăмăртăва уçрĕ.

Кăвак беретлă «афганецсем», шурă кĕпепе хура «лĕпĕшлĕ» судьясем ăмăртăвăн чаплăхне те, сумлăхне те ытларах палăртрĕç. Шупашкарти агрегат заводĕнчи «афганецсен» пĕрлешĕвĕ акă ятарлă кубок çирĕплетнĕ. Пирĕн районти интернационалист-салтаксен пĕрлешĕвне ертсе пыракан В. Киршев çитĕнекен ăрăва патриотла воспитани парассинче палăрнисене Хисеп грамотисем, медальсем парса чысларĕ.

Иртнĕ кĕçнерни кун бокс ăмăртăвне пуçарса ячĕç тесен те тĕрĕс пулать пулĕ. Малашне те бокс ăмăртăвне çулсеренех кунта ирттерме палăртрĕç. Мĕншĕн тесен ăмăртăва килнĕ сумлă спортсменсем, хăнасем пурте Муркаш ăна ирттерме тивĕçлĕ пулнине пĕлтерчĕç. Ăмăртăвăн тĕп судйи, бокс енĕпе тĕнче чемпионĕ Валерий Львов: «Ăмăрту малашне те Муркашрах иртĕр. Пирĕн кунта килме кăмăл пысăк», – тени те çавнах çирĕплетрĕ. Чăнах та ăмăртăва, пĕрремĕш хут пулин те, çӳллĕ шайра ирттерме пултарчĕç.






Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнчи пĕрремĕш кĕрешӳре Муркаш боксерĕ Игорь Быков (**çӳлти сăн ӳкерчĕкре сулахайри**) çĕнтерни вара хăйне май лайăх паллă пулчĕ. Кайранхи кĕрешӳсенче, виçĕ кунĕнче те, пирĕн яшсем техника енĕпе те, кĕрешӳсен пахалăхĕпе те палăрчĕç. Финалти кĕрешӳсем çакна лайăх кăтартса пачĕç. Иван Налимов чи кĕске вăхăтра пынă кĕрешӳпе палăрса, «Чи лайăх боксер» ят илсе кубока тивĕçрĕ. Родион Музыковăн (**сăн ӳкерчĕкре сулахайра, варринче кĕрешӳ çĕнтерӳçи Алексей Корчагин С. Черкашинпа пĕрле**) çĕнтерес кăмăлĕ питĕ пысăк пулнине палăртса ăна та ятарлă кубок парса хавхалантарчĕç. Александр Никитин тата Николай Багдасарян боксерсен финалти кĕрешĕвĕ куракансене тыткăнлани залта шăплăх хуçаланнинчен те, кашниех тимлесе, пĕр çеккунтлăх та рингран куç вĕçертменнинчен те курăнчĕ. Кĕрешӳре хальхи вăхăтра Санкт-Петербург хулинче ăсталăха туптакан Александр Никитин çĕнтерчĕ. «Ăстасен кĕрешĕвĕ пулчĕ, питĕ пахалăхлă, – çапла хак пачĕ Ростислав Тимофеев ăмăрту вĕçленнĕ май. – Çакăн пек кĕрешӳсене курса спортпа тата та ытларах çамрăк туслашасса шанса тăратпăр», – тесе пĕтĕмлетрĕ вăл район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне Муркаш районĕн команди çĕнсе илнине пĕлтерсе.

Кубок «килте» юлнинче вара Сергей Васильевич Черкашин, Олег Артурович Сютруков тата Сергей Сергеевич Черкашин тренерсен тӳпи пысăк. Ăмăртăва ирттерме пулăшакансем те сахал мар пулчĕç (вĕсене район администрацийĕн Тав çырăвĕсемпе палăртрĕç). Апла пулсан Муркаш тăрăхĕнче спорт хăйĕн пĕлтерĕшне çухатмастех.

# Хĕллехи спартакиадăра

Районти шкул ачисен хĕллехи спартакиадине кăçал Муркашри В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ 40 çул тултарнине халалларĕç. Шкул çакна тивĕç паллах. Йĕлтĕр спортне кăна илес пулсан та чылай йĕлтĕрçĕ шăпах çакăнти йĕлтĕр йĕрĕ çинчен пысăк спорта тухнă та.

Спартакиадăн малтанхи кунĕнче шкул ачисем Калайкассинче эстафетăра вăй виçрĕç пулсан, иккĕмĕш кунĕнче Муркашра йĕлтĕрçĕсен чупăвĕ иртрĕ. Вырсарни кун кунта шкул ачисемпе пĕрлех районти предприятисемпе организацисен тата учрежденисемпе ял тăрăхĕсен командисем те хăйсен спартакиади шучĕпе старта тухрĕç.




Малтанах пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсенче вĕренекен хĕр ачасем старта тăчĕç. 3 çухрăм тăршшĕ дистанцие пуринчен малтан Кашмашри шкулта вĕренекен Виктория Тихонова (**сăн ӳкерчĕкре варринче**) вĕçлерĕ. Ун хыççăн – Сыпай шкулĕнчи Ксения Дашкова (**сулахайри**), виççĕмĕш – Кашмаш шкулĕнчи Ирина Замятина (**сылтăмри**).

Çапла хĕрсен стартне яшсем ылмаштарса вăтам шкулсенчи вăтам тата аслă ушкăнсем те черетпе хăйсене йĕлтĕр йĕрĕ çинче тĕрĕслерĕç. Хыççăн старта районти предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата ял тăрăхĕсен командисем тухрĕç. Дистанцисем тĕрлĕрен пулчĕç – 3 çухрăмран пуçласа 10 çухрăм таранах.

Шкул ачисен спартакиадин çĕнтерӳçисене икĕ кунхи пĕтĕмлетӳсене – эстафетăри тата йĕлтĕр чупăвĕнчи кăтартусене шута илсе палăртрĕç. Çапла майпа тĕп шкулсенчен Кашмаш шкулĕ мала тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Сыпай шкулĕн команди, виççĕмĕшĕнче – Шетмĕпуç шкулĕн команди. Вăтам шкулсенчен Калайкасси шкулĕн командине çитекеннни пулмарĕ. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсене Муркашри тата Çатракассинчи вăтам шкулсем тухрĕç.

Аслисем вара малти вырăнсене çапла пайларĕç: 1-мĕш вырăнта Çатракасси ял тăрăхĕ, 2-мĕш вырăнта – Ярапайкасси ял тăрăхĕ, 3-мĕш вырăнта – Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕ. Çĕнтерӳçĕ командăсем кубоксене тивĕçрĕç. Уйрăм стартсенче мала тухнисене В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулăн директорĕ А. Сидюшкин парнесем парса хавхалантарчĕ.

# Ю. Федотова асăнса старта тухрĕç

Чăваш Республикин чемпионне Ю. Федотова асăнса йĕркеленĕ республикăри йĕлтĕрçĕсен эстафети кăçалхипе 11-мĕш хут иртрĕ. Мартăн 2-мĕшĕнче йăлана кĕнĕ тăрăх вăл Калайкасси шкулĕнче пулчĕ. Асăннă ăмăртăва шкулта вĕренекенсен, учитель коллективĕсен командисем хутшăнчĕç.

Ăмăрту умĕнхи кунсенче çанталăк асар-писер тăнăран йĕлтĕр йĕрне хатĕрлекенсене самаях ывăр килнĕ паллах, анчах та трассăна йĕркеллех хатĕрлесе çитернĕ. Юр хӳсе тултарнăран вара ăмăртăва килес тенисем пурте килсе çитейменнине пĕлтерчĕç. Çапах та ăмăрту кунĕнче лăпланнă асар-писер хыççăн тӳпене хĕвел тухса савăнтарчĕ. Старта йышлăн тухрĕç. Шупашкартан, Элĕк районĕнчен, Мари Элтан та йĕлтĕрçĕсем Калайкассине çĕнтерес кăмăлпах килнĕ.

Спорта юратакансене Юрий Федотовăн пиччĕшĕсем Александр тата Михаил Федотовсем те, республикăри ертӳçĕсем те саламларĕç. Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Николай Якимов Физкультурăпа спорт тата туризм министерстви ыйтнипе Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнче вăй хуракан Родион Григорьев тренера Хисеп грамотипе, Вячеслав Киселев тренера Тав çырăвĕпе чысларĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев район администрацийĕн Хисеп грамотине асăннă спорт шкулăн завучĕ Александр Петров тата Игорь Смирнов тренер тивĕçнине пĕлтерчĕ.



Пĕрремĕш тапхăр старт илчĕ.

Ертӳçĕ спортсменсене саламласа ăнăçусем суннă хыççăн пурте старт вырăнне васкарĕç. Эстафета питĕ хаваслă та хĕрӳ пулчĕ. Пурин те хаклă парнесене (ку ăмăрту парнесемпе пуянни спортсменсем лайăх пĕлеççĕ), дипломсене тивĕçес килчĕ. Анчах кашни ăмăртурах чи вăйлисем çĕнтереççĕ.

Вăтам ушкăнра (кунта тĕп шкулсен командисен кăтартăвĕсене те, вăтам шкулсен командисен кăтартăвĕсене те танлаштараççĕ) Муркашри вăтам шкулăн команди çĕнтерӳçĕ пулма тивĕçрĕ, аслă ушкăнрисенчен чи хăвăрттисем Калайкассисем пулчĕç. Учительсен командисем хушшинче те кил хуçисемех мала тухма пултарчĕç. Çапла вара тĕп кубок кăçал Калайкассинчех юлчĕ.

Ăмăртăва хутшăнакансене вĕри апатпа хăналарĕç. Куракансене «Ентеш» юрăпа ташă ушкăнĕ концерт программипе те савăнтарчĕ. Ю. Федотова асăнса ирттернĕ ăмăрту районти шкул ачисен хĕллехи спартакиадин пуçламăшĕ пулчĕ.

**Ăмăртусене Н. НИКОЛАЕВА сăнанă. Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
НАМ 10 ЛЕТ
ЗАЙМЫ
• под материнский капитал
на покупку и строительство жилья
• на повседневные цели
ПОДАРКИ - ДОБРОСОВЕСТНЫМ ЗАЕМЩИКАМ
юбилейная акция с 06.02.2013 по 30.09.2013
СБЕРЕЖЕНИЯ
выгодные % ставки
62-6-86
8 900 333 0001
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru

**Итоги публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

27 февраля 2013 года в здании Сятракасинской сельской библиотеки Моргаушского района Чувашской Республики прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

Приняты следующие рекомендации участников публичных слушаний:

1. Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

**Председательствующий вр.и.о. главы Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Г.В. ТРОФИМОВ.**

ООО «ВИКТОРИЯ»
* Представительство в судах всех инстанций.
* Составление договоров, претензий, исковых заявлений.
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП, внесение изменений.
* Ведение бухгалтерского учета, составление отчетности.
* Кадровое делопроизводство.
* Бизнес-консультации.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119. Тел.: 62-4-43.; г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru

БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78. 3-43.

Широкий выбор продукции Вурнарского мясокомбината. Вкусно. Дешево. Всегда свежая продукция. Адрес: с. Моргауши, рынок, магазин «САНАР-20». 1-3.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА Brusbox от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Закажите зимой окна в рассрочку, установим весной. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-937-955-33-00, 8-917-662-71-64. 8-10.

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 4-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 7-30.

Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Св. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира-9А. Тел.: 62-6-03.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Соловьев Михаил Сергеевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 75. Соловьева Раиса Леонидовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 75.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

МЕБЕЛЬ. Широкий выбор. СКИДКИ. Двери металлические, межкомнатные. Адрес: с. Моргауши, здание бани, 2 этаж. Тел.: 8-965-686-08-96. 2-2.

ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-927-668-84-40. 3-43.

### Тав тăватпăр



Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çывăх çыннăмăрăн, тăванăн, Владислав Александрович Никитинăн чĕри сасартăк тапма пăрахрĕ. Эпир, унăн амăшĕ, ачисем, пиччĕшĕ, шăллĕ тата кинĕсем, йăмăкĕсемпе кĕрӳшĕсем çак йывăр, нимĕнле тӳрлетме май çук суханушан чĕререн хурланатпăр. Мĕн пур тăвана, ял-йыша тата Владислава хисеплекен пур пĕлĕш-тантăшне пирĕн хаклă, юратнă çыннăмăра юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр.

Владислав, эпир сан умăнта ырă кăмăлушăн, ылтăн аллусемшĕн, çынна юратма пĕлнишĕн çĕре çити пуç таятпăр. Тăпру çăмăл пултăр. Эсĕ яланах пирĕн асăмра.

НИ МНОГО НИ МАЛО - ЧЛЕН КАПИТАЛА
СЕГОДНЯ ВЫСОКИЕ ПРОЦЕНТНЫЕ СТАВКИ ПО СБЕРЕЖЕНИЯМ
БЫСТРЫЕ ДОСТУПНЫЕ ЗАЙМЫ
6-23-10
ул. Чапаева, 44 а/ 2
8 927 667-48-92
КАПИТАЛ
кредитный потребительский кооператив граждан









4-11.
ТЕПЛИЦЫ
от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д.
Телефоны:
8-917-651-00-76
8-927-858-28-79.

ООО «Металл-строй» изготавливает и продает ТЕПЛИЦЫ, козырьки, металлоконструкции, банные печи, баки из нержавейки, скамейки, ворота, туалеты, кованые заборы, решетки и т. д. Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 14. Тел.: 63-3-38, 8-937-390-73-51. 1-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.

Бурение колодцев, колодезные кольца. Доставка, установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 3-3.

Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Технониколь» – 530 руб.; гипсокартон – 190 руб.; ОСП 9 мм (1,25х2,50) – 555 руб.; профнастил оцинк. 2 м – 400 руб., (167 руб. м²), профнастил крашеный 2 м – 480 руб., (209 руб. м²); сухие смеси, цемент – 180 руб.; сайдинг; двери. Тел.: 8-903-322-59-69, 8-961-348-66-36. 1-10.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам:
скидки до 35%
8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Только с 5 по 18 марта.
ВОЗЬМИ 3 ОПЛАТИ 2!
Купи 12 000 руб. + 3 000 руб. Выбери Подарок на 2 250 руб.
Купите два товара, выберите третий в подарок!
Акция «Возьми 3, оплати 2» действует в период с 05.03.13 по 18.03.13 во всех магазинах сети «Лидер». Теперь при покупке двух единиц товаров вы можете выбрать и бесплатно получить в подарок третий на сумму до 15% от стоимости приобретенных двух товаров. Полный текст правил с учетом установленных ограничений уточняйте в магазинах сети «Лидер» или на сайте www.lider21.ru. Количество товаров ограничено. Товар сертифицирован. Организатор акции: ООО «БТ», г.Канаш, ул.Кооперативная, д.31, ОГРН 1082134000277. Кредит предоставляет: КПКГ «Эконом кредит», ОАО «ОТП Банк».
Бытовая техника Лидер
Всегда низкие цены
Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (с торца здания Дома быта). Тел.: 62-3-80. 3-10.

МЦФ Межрегиональный центр финансирования
www.mcf21.ru
8-967-473-61-21, 69-3-75
ООО "Межрегиональный Центр Финансирования"
ЗАЙМЫ БЕЗ ВЗНОСОВ И КОМИССИЙ
› НА ЛЮБЫЕ ЦЕЛИ
› ДЛЯ ПОКУПКИ И СТРОИТЕЛЬСТВА ЖИЛЬЯ ПОД МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ
ЗАЙМЫ НА РАЗВИТИЕ ЛПХ - ВЫГОДНЫЕ УСЛОВИЯ
Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, 16

Продаю племенных кроликов-акселератов калифорнийской породы. Отдадим в хорошие руки щенят немецкой овчарки. Тел.: 8-927-66-55-900.

* * *

Продаю поросят от 8 кг и выше. Тел.: 8-960-311-22-86. 3-5.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 8-12.

* * *

Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 4-10.

* * *

Хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-903-063-59-98, 8-905-340-15-08.

* * *

Продаем сено в рулонах и тюках. Недорого. Тел.: 8-927-865-17-20. 1-2.

* * *

Продается горбыль 2м. и 1,5м. для ограды, а также березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 2-2.

* * *

На постоянную работу требуются монолитчики. Оплата сдельная. Питание. Жилье предоставляется. Тел.: 8-905-028-70-00. 1-2.

* * *

Январьте тăваттăмĕш пăрулана хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Хакĕ калаçнă тăрăх. Москакасси ял тăрăхĕ. Тел.: 8-927-666-36-53, 8-927-849-74-96.

* * *

Пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 1-10.

* * *

Продаю двухкомнатную квартиру по ул. Парковая в с. Моргауши, пл. 60 кв. м., индивидуальное отопление, балкон. Тел.: 8-905-029-43-39.

* * *

Тăваттă пăрулана хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-990-25-34. 1-2.

* * *

Тюклана утă, улăм сутатпăр. Леçсе паратпăр. Тел.: 8-965-689-46-05, 8-937-954-52-30.

* * *

Молодая семья снимет жилье в с. Моргауши. Тел.: 8-917-677-09-82. Ирина.

* * *

Икĕ ĕнерен пĕрне сутатпăр: пĕрре пăрулана хура-шурă тĕслине е пиллĕк пăрулана хурине. Тел.: 8-965-682-19-18, 8-905-199-79-49.

Ярапайкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта пуçламăш классене вĕрентекен Л.А. Ядыковăн хуньашшĕ, ĕçпе вăрçă ветеранĕ

**Порфирий Николаевич ЯДЫКОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Администрация и профком БУ «Моргаушская ЦРБ» выражают глубокое соболезнование заместителю главного врача Толстову В.В., врачу общей практики Толстовой В.В. по поводу безвременной кончины отца

**ТОЛСТОВА Владимира Петровича.**

Мăн Хураçка ялĕнче пурăннă, нумай çул хушши Жданов ячĕллĕ, «Нива» хуçалăхсенче тĕп инженерта ĕçленĕ

**Сергей Леонидович ИЖУТОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсем, пĕрле ĕçленисем, ял-йыш тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерессĕ.

### Прогноз погоды

| | четверг 7 марта | | | | пятница 8 марта | | | | суббота 9 марта | | | | воскресенье 10 марта | | | | понедельник 11 марта | | | | вт 12 м. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -13 | -4 | 0 | -9 | -11 | -9 | -7 | -11 | -18 | -15 | -10 | -19 | -20 | -16 | -10 | -17 | -21 | -18 | -12 | -17 | -21 |
| Давление мм | 740 | 732 | 732 | 737 | 739 | 740 | 743 | 746 | 748 | 748 | 748 | 748 | 747 | 746 | 745 | 744 | 744 | 744 | 744 | 745 | 746 |
| Влажность % | 75 | 88 | 62 | 64 | 66 | 81 | 58 | 68 | 71 | 84 | 62 | 70 | 68 | 86 | 59 | 65 | 62 | 84 | 56 | 67 | 66 |
| Ветер м/сек | 7 | 11 | 11 | 11 | 9 | 8 | 8 | 6 | 3 | 3 | 3 | 1 | 1 | 2 | 3 | 3 | 5 | 4 | 5 | 5 | 5 |
| | Ю | Ю-З | З | З | З | З | З | С-З | С-З | Ю-З | З | Ю | С-В | С-В | С-В | С-В | С | С | С-З | С-З | З |
| Солнце восход / заход | | 07:27 | 18:40 | | | 07:24 | 18:42 | | | 07:22 | 18:44 | | | 07:19 | 18:46 | | | 07:16 | 18:48 | | 07:14 |
| Луна восход / заход | | 04:54 | 13:20 | | | 05:29 | 14:40 | | | 05:57 | 16:02 | | | 06:20 | 17:23 | | | 06:40 | 18:43 | | 06:59 |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 3 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 06.03.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4948.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.